24-мĕш çул тухать. Хакĕ 15 пус.

1941 ИЮЛЬ 11 ЭРНЕКУН 161 (5876) №

ЧĂВАШ КОММУНИ

Пĕтĕм тĕнчери пролетарисем, пĕрлешĕр!

ВКП(б) ОБКОМĔПЕ ШУПАШКАР ХУЛА КОМИТЕЧĔН, ЧАССР ВЕРХОВНЫЙ СОВЕЧĔН ТАТА ШУПАШКАР ХУЛА СОВЕЧĔН ХАÇАЧĔ.

Пĕтĕм ĕçе вăрçă вăхăтне тивĕçлĕ пек урăхлатса çĕнетес пулать!

Виççĕмĕш эрне ĕнтĕ паттăр Хĕрлĕ Çар пирĕн тăван çĕр çине вăрă-хурахла тапăиса кĕнĕ нимĕç фашисчĕсен йыткĕтĕвĕсене хирĕç геройла кĕрешет. Тăшман çулĕ çинче унăн виллисемех çĕршер пин сапаланса выртаççĕ. Хĕрлĕ Çар аслăран та аслă вăйпа çине тăрса, пĕтĕм тĕнчене тĕлĕнтерекен, халиччен никам курман паттăрлăхпа çапăçать. Хĕрлĕ Çар пирĕн хăюллă та паттăр халăхăн ывăлĕсене тивĕçлĕ пек çапăçать. Анчах та тăшман малалла кайса пырать. Вăл çапăçăва çĕнĕ вăйсем кĕртe-кĕрте ярать. Пирĕн тăван çĕршыв умне тухса тăнă пĕтĕм хăрушлăха ăнланса тăрса, хамăрăн ăслă рулевой—аслă Сталин ертсе пыракан Оборонăн Государственнăй Комитечĕ чее те ултавлă, пур енчен те хĕçпăшаллă тăшмана çĕнтерме ССР Союзĕнчи халăхсен мĕнпур вăйĕсене мобилизацилет, пĕтĕçтерет, пĕрлештерет.

Радио тăрăх тухса каланă сăмахра Сталин юлташ çапла тума чĕнчĕ:

— Тăшмана çĕмĕрсе тăкма халăхăн пĕтĕм вăйĕсене хурар!

Çулпуç чĕнни çине совет халăхĕ тăван çĕрĕн кашни пусăмĕшĕн пĕтĕм вăя, пĕтĕм чĕрене хурса çапăçма хатĕр тăнипе ответлет. Хĕрлĕ Çăран речĕсем кашни кун йышланса пыраççĕ. Çынсем тата вооружени тиенĕ эшелонсем фронта каяççĕ. Хĕрлĕ Çара пулăшма халăхăн хăватлă ополчени полкĕсем йĕркеленсе çитĕнеççĕ. Йăлтах фронт валли, йăлтах çĕнтерӳ валли! Çак шухăшпа пурăнать пирĕн парти, пирĕн правительство, пирĕн пĕтĕм халăх.

«Пирĕн хамăрăн пĕтĕм ĕçе халех вăрçă вăхăтне тивĕçлĕ пек урăхлатса çĕнетес пулать, пурне те фронт интересĕсене тата тăшмана çĕмĕрсе тăкас задачăсене пăхăнтармалла»,—тесе хушать Сталин юлташ. Партипе государство аппаратĕн пĕтĕм ĕçне, промышленноçăн, транспортăн, çыхăнăвăн, ялхуçалăхĕн пĕтĕм ĕçне фронт интересĕсене пăхăнтармалла.

Промышленность — фронтăн техникăллă тата материаллă бази. Халĕ пирĕн «мирлĕ» предприятисем пулма пултараймаççĕ. Кашни завод, кашни фабрика вăрçă нушисене тивĕçтерес тĕлĕшпе ĕçлеме тивĕçлĕ. Халĕ пире мирлĕ вăхăтри пысăк хăвăртлăхсем те тивĕстерме пултараймаççĕ. Вăхăт тĕлĕшĕнчи выигрыш—вăрçă вăхăтĕнчи чи пысăк та кирлĕ выигрыш. Фронт заказĕсене васкавлă хăвăртлăхсемпе пурнăçа кĕртес пулать. Партипе хуçалăх организацийĕсен, производство командирĕсен, рабочисемпе служащисен пĕр çĕре пухăнăва мĕнпур вăйĕсен пысăк та çирĕп ирĕкĕн линийĕ васкавлă проектировани патĕнчен сериллĕ продукцине васкавлăн туса кăларма вĕренсе çитесси патне çити тăсăлса выртмалла.

Промышленность наркомачĕсен, главксен тата заводсен аппарачĕсем хальхи вăхăтра калама çук тĕплĕн ĕçлеме, пĕтĕм ĕçе вăхăтра тума тивĕçлĕ. Хуть сырасси тата приказсем шухăшласа кăларасси сахалрах пултăр, оперативлă руководство нумайрах пултăр. Халăх комиссариачĕсем ресурссене тĕрĕс тыткалама пĕлни хальхи вăхăтра нихăçанхинчен те ытларах кирлĕ. Укçа-тенкĕне, оборудованине, материалсене инерци тăрăх, мирлĕ вăхăтри кивĕ плансем тăрăх вырнаçтарма юрамасть. Кашни асиглованире, оперативлă кашни распоряженире Хĕрлĕ Çăран нушисене тивĕстерессишĕн, фронта мĕн кирлине йăлтах парассишĕн вĕçĕ-хĕрисĕр тăрăшни пулма тивĕçлĕ.

Пирĕн аппаратсене пĕтĕм вăя чăнăн вăрçăри пек пухни туйăнса тăмалла. Оборона нушисемпе çыхăнса тăман ĕçсене урăх вăхăта хăварма пулать тата ăна çаван пекех тăвас пулать те. Аппаратри специалистсен хаклă кадрĕсене—фронта мĕн кирлине парса тăракан предприятисене куçармалла!

Вăрçă обстановки промышленноçа уйрăмăнах пĕтĕм вăя мобилизацилесе ĕçлеме хушать. Задача çакăнта пулать: сахалрах расходсем туса епле пулсан та нумайрах продукци туса кăлармалла. Вăрçă вăхăтĕнче эпир пур ĕçре те питех те çирĕп перекетлĕ, тирпейлĕ пулма тивĕçлĕ. Ирсĕр тăшмана пĕтерсе тăкас ĕç валли эпир снарядсемпе бомбăсене кăна шеллеместĕр тата шеллес те çук!

Вăрçăн пирвайхи кунĕсенчех совет патриочĕсем хăйсем сахалрах йышлă работниксемпе ĕçлесе нумайрах продукци пама пĕлнине кăтартса пачĕç. Çара илме призыв пулчĕ пулсан та, çĕркăмрăк кăларасси хăнарчĕ, нефть кăларасси ӳссе пырать, машинăсем туса кăларасси пысăкланса пырать. Халĕ кашни совет çынни икĕ çыннăн, виçĕ çыннăн ĕçлеме тăрăшать. Еçĕн стахановла меточĕсем — нумай станоксемпе тата тĕрлĕ профессисемпе ĕçлесси—ытларах та ытларах сарăлса пырать. Çак движенине чи анлăн сарса ярас пулать.

Пирĕн промышленность пĕтĕм вăйпа ĕçлет, фронтри çĕнтерĕве туптаса çирĕплетет. Çĕркăмрăкпе нефть нумайланса пырать, çакăнпа пĕрлех хальхи вăхăтра инçетрен турттарса килмелли топливо çинчен вырăнти топливо çине куçассине нихăçанхинчен те вăйлăрах пурнăçа кĕртсе пымалла. Продукцин пĕр единицине туса кăларас ĕçре расходлакан топливăпа электроэнерги хисепне чакарассине нихăçанхинчен те вăйлăнрах пурнăçа кĕртсе пымалла. Пирĕн çĕршывра чĕртаварăн калама çук пысăк запасĕсем пур, çав вăхăтрах вăрçă обстановки мĕнпур йышши чĕртавара мĕн май килнĕ таранах перекетлеме хушать.

Укçа-тенкĕне, топливăна, электроэнергине, чĕртавара, инструмента перекетлесси, отходсемпе усă курасси, кивелнĕ инструмента çĕнетсе ĕçе юрăхлă тăвасси, ĕçе перекетлесси, вăхăта перекетлесси, оборудованипе мĕн май килнĕ таранах усă курасси—промышленноçри кашни работникăн тата уйрăмах производство командирĕсен, инженерсен задачи пулса тăрать. Тирпейсĕрлĕхе мирлĕ вăхăтра чăтса тăма юраман пулсан, вăрçă вăхăтĕнче вара вăл тăван çĕршыв умĕнче йывăр преступлени пулса тăрать.

Хăвăртлăхсем çинчен, пĕчĕкрех йышлă работниксемпе ĕçлеме пĕлни çинчен, перекетлесси çинчен тăракан ыйту ялхуçалăхĕ умĕнче те çаван пекех çивĕч ыйту пулса тăрать. Мĕнпур тырпула кĕске срокра тата тăкаксăр пухса кĕртесси, ялхуçалăхĕнчи ытти мĕнпур ĕççене вăхăтра туса ирттересси, колхозсем хăйсен государство умĕнчи тырă, какай тата ытти продуктсем памалли обязательствисене тултарас ĕçе отлично организацилесси—кашни парторганизацин задачи. Парти райкомĕн секретарĕн, МТС директорĕн, колхоз председателĕн ĕçе тумалли конкретлă программа, тырпула пĕчĕкрех йышлă арçынсемпе пухса кĕртме тĕплĕн шухăшласа хатĕрленĕ план пулмалла. Пур пек машинăсен паркĕпе мĕн май килнĕ таранах усă курса, мĕнпур расчетсене тунă чухне горючи расходлассине вăйлăн чакарма кирлине шута илес пулать. Хĕрарăм патриоткăсем хушшинче тракторпа тата комбайнпа ĕçлеме вĕренессишĕн пыракан движени пуçланчĕ. Паха та чаплă пуçару! Анчах та кунта лайăх тесе ырланине кăна ĕç тухас çук. Трактористсемпе комбайнерсем çителĕксĕр пулнипе пĕр трактор та, пĕр комбайн та ĕçсĕр ан тăтăр тесе, хĕрарăмсене вĕрентес ĕçе организацилес пулать. Тырпул пухса кĕртмелли простой машинăсемпе, чĕрĕ туртăм вăйпе уйрăмах анлăн усă курмалла. Уборкăра кашни сехете, кашни минутăна хаклămалла! Машинăсем вырăнтан вырăна пушăлла куçса çӳрени нимĕн чухлĕ те пулмалла мар. Кашни машина валли—тĕплĕн палăртса хатĕрленĕ маршрут!

Çак вăхăтра уйхирсенчи ĕç уйрăмах хĕрӳллĕ, пысăк тухăçлă пулмалла. Кăнтăр апачĕ, каçхи апат тума тата ытти çаван пек ĕççене тума яла çӳресе вăхăт сухатас мар тесе, уйри станра пурăнмалла. Пурте,—ваттисем те, çамрăкисем те,—уйхире, пысăк тухăçлă тырпула пухса кĕртес ĕçе тухмалла! Шкул ачисем, подростоксем колхозсене пысăк пулăшу пама пултараççĕ тата ăна тума тивĕçлĕ те.

Пирĕн пĕтĕм хуçалăхлă ĕçе фронт нушисене кирлĕ пек хăвăрт йĕркелесси—кашни парторганизацин чи çывăх ĕçĕ. Мобилизацине ăнăçлăн ирттересси, сывлăшран килсе тапăннинчен вырăнта сыхланасси, массăсем хушшинче анлăран та анлă политикăллă агитаци тăвасси, тыла дезорганизацилекен мĕнпур çынсене хирĕç пĕр шеллемесĕр кĕрешесси, промышленноçăн, транспортăн, çыхăнун, ялхуçалăхĕн мĕнпур предприятийĕсене вăйлăн ĕçлемелле тăвасси—акă мĕнпе пурăнма тивĕçлĕ, акă мĕнпе пурăнать çак кунсенче большевикла организаци. Парти оргăнĕн—обкомăн, крайкомăн, горкомăн, райкомăн аппарачĕ çар штабĕн аппарачĕ пек ĕçлеме тивĕçлĕ. Парти работникĕсем хăйсем ĕçе тĕплĕн тупнипе, оперативлă пулнипе, ĕçе кирлĕ пек тата вăхăтра тупнипе советпа хуçалăх аппарачĕн мĕнпур работникĕсене пример кăтартма тивĕçлĕ.

...«Вăрçă пурпĕрех пуçланчĕ пулсан—йăлтах вăрçă валли, кăшт кăна тирпейсĕр пулнăшăн тата энерги çителĕксĕр пулнăшăн вăрçă вăхăтĕнчи законсем тăрăх айăплас пулать. Вăрçă вăл—вăрçă, тылра е мĕнле те пулин мирлĕ занятисенче çак обязанноçран никам та пăрăнса тăма пултараймасть.

Çакăн пек лозунг пулмалла—йăлтах вăрçă валли!» (Ленин).

Йăлтах фронт валли! Пĕтĕм ĕçе вăрçă вăхăтне кирлĕ пек йĕркелемелле! Йăлтах тăшмана çĕнтерес ĕç валли!

(«ПРАВДА» умстатьи, июлĕн 10-мĕш).

Совет Информаци Бюровĕнчен

(Июлĕн 9-мĕшĕнчи каçхи пĕлтерӳ)

Июлĕн 9-мĕшĕнче пирĕн войскăсем Остров, Полоцк тата Новоград-Волынск енĕсенче çĕмĕрсе кĕме хăтланнă противникăн танковăй тата моторизованнăй пысăк чаçĕсене хирĕç хаярăн çапăçнă.

Остров енче пирĕн войскăсем çине тăрса вăйлăн çапăçаççĕ, противникăн пысăкрах вăйĕсене малалла наступлени туса пыма чарса тăраççĕ.

Полоцк енче ирхине противник çĕнĕрен наступлени тума пуçланă. Пирĕн войскăсем тăшмана артиллерипе пулеметсенчен аркатса тăкмаллах вăйлăн пенине тата татăклă контратакăсемпе кĕтсе илнĕ. Çапăçу халĕ те пырать. Противника пысăк сухатусем кӳреççĕ.

Лепель енче пирĕн войскăсем противника хирĕç ăнăçлă контратакăсем тăваççĕ.

Новоград-Волынск енче пирĕн войскăсем кунĕпех противникăн пысăк мотомехчаçĕсене хирĕç хаярăн çапăçнă.

Фронтăн ытти енĕсемпе участокĕсенче пирĕн войскăсен çапăçăвĕсем пыраççĕ, хăйсем йышăннă позицисене тытса тăраççĕ.

Пирĕн авиаци противникăн мотомехчаçĕсене хирĕç кĕрешнĕ, унăн аэродромсенчи авиацине пĕтере-пĕтере тăкнă.

* * *

Пирĕн авиаци Констанца çине, Тульчăри тата Сулинăри портпа транспортсем çине, Плоэштири нефть промыслисем çине бомбăсем кайса пăрахнă.

Констанца çине пырса тапăннă вăхăтра пирĕн 9 бомбардировщика хирĕç противникăн 14 самолечĕ вĕçсе çĕкленнĕ. Сывлăшра пулса иртнĕ çапăçура пирĕн самолетсем противникăн 7 самолетне персе антарнă, пирĕн пĕр самолет кăна пĕтнĕ.

* * *

Старший лейтенант Юнацкин танковăй подразделенийĕ противникăн пысăк вăйĕсене тĕл пулнă. Пуçланса кайнă çапăçура совет танкисчĕсем фашистсен 15 танкне стройран кăларнă. Хĕрӳллĕ çапăçу вăхăтĕнче Юнацкий танкĕн орудийĕ стройран тухнă. Хăюллă та паттăр танкист тăшман çине вирхĕнсе кĕнĕ, ăна хăйĕн хăватлă танкĕпе таптаса çĕмĕрме пуçланă. Вăйлăн пырса тăрăнтарнипе фашистсен пĕр танкĕ ӳпне çаврăнса ӳкнĕ, тепĕр темиçе машинине çĕмĕрсе тăкнă. Тепĕр икĕ куntан Юнацкий татах та хăюллăрах маневр тунă. Тăшман артиллерийĕ пирĕн пехотăна сарăлса кайма чăрмантарни çинчен донесени илнĕ хыççăн, Юнацкий противника атакăланă, унăн тылне шалалла çĕмĕрсе кĕнĕ. Противник персе тăракан позицисем çине пырса çитсе, Юнацкий подразделенийĕн танкĕсем фашистсен орудийĕсене аркатса çĕмĕрме пуçланă. Хăюллă совет танкисчĕсем противотанковăй 20 тупăна тата 152 миллиметрлă пĕр орудине пĕтерсе тăкнă.

* * *

Хура тинĕс флотĕнчи бомбардировщиксен эскадрильи, капитан Цурцумия командованийĕнче тăракан эскадрилья, противник карапĕсене атакăланă. Пирвайхи бомбăсем тăшманăн икĕ карапĕ çине ӳкнĕ. Карапсем путнă. Унтан старший сержант Семенов тăшманăн виççĕмĕш карапне шыраса тупнă. Эскадрильйăн опытлă штурманĕ Корбатов çав карап монитор пулнине палăртнă, тĕрĕс расчетпа атакăласа, ăна пĕрремĕш хут вĕçсе пырса персе лектернĕ. Çапăçу хыççăн капитан Цурцумия самолетсене пурне те хăйĕн аэродромне илсе çитернĕ, самолетсене нимĕнле сиен те пулман.

* * *

Н-ски стрелковăй полкри красноармеецсем Паянинпа Крестьянинов противника хирĕç çапăçса, хăйсен подразделенийĕнчен уйăрăлса кайнă, тăшман тылне шала тăрса юлнă. Крестьянинова часах амантнă пулнă. Çакăн хыççăн вара Паянин, аманнă юлташне çурăм çине çĕклесе илнĕ те, асăрханаасăрхана каялла чакма пуçланă. Çул çинче Паянин çине фашистсем тапăннă. Вĕсене хирĕç çапăçма пуçласа, вăл 5 нимĕçе персе ӳкернĕ. Хăюллă та чăтăмлă боец хăйĕн юлташне 3 километр йăтса пынă, хамăраннисем патне çитсе пĕрлешнĕ.

* * *

К. местечко патĕнче Румыни чаçĕсене хирĕç пыракан çапăçура Н-ски стрелковăй полкăн батальонĕ Румынин 16 офицерĕпе 589 салтакне тыткăна илнĕ. 11 оруди, 6 миномет, 12 станковăй пулеметпа 24 ручной пулемет, 396 винтовка, снарядсем, гранатăсем, винтовка патронĕсем тата ытти çар пурлăхĕсем туртса илнĕ.

* * *

Противник тылĕнче шалта разведка туса çӳренĕ вăхăтра пирĕн разведчиксем лейтенант Сахаров тата красноармеецсем Погодинпа Курицын вăйлă взрыв пулнине илтнĕ. Инçетре часах пĕлĕт çине хĕрлĕ çулăм çути ӳкнĕ. Взрыв пулнă вырăна никама курăнмасăр пырса çитсен, çĕмĕрсе тăкнă самолетсен группи патĕнче красноармеецсем совет партизанĕсен пысăк отрядне курнă. Партизансен отрячĕн командирĕпе С. юлташпа калаçсан çакă палăрнă: вăрман хĕрринчи уçланкă тăшманăн вăртăн аэродромĕсенчен пĕри пулнă. Нимĕн асăрхамалла мар туса йĕркеленĕ уçланкă фашистсен истребителĕсен бази пулса тăнă. Взрыв пуличчен виçĕ кун маларах çак аэродрома партизанла отрядăн разведчикĕсем шыраса тупнă. Аэродром çине пырса тапăнма совет патриочĕсем икĕ талăк хушши хатĕрленнĕ. Партизансем çавтери кĕтмен çĕртен пырса тухнă, аэродромра пулнă нимĕçсенчен темиçе салтак кăна çăлăнса юлнă. Партизансем пырса тапăннипе 5 самолета, горючи запасне тата боеприпассем складне пĕтерсе тăкнă.

* * *

Сталин юлташ чĕннипе Совет Союзĕнчи халăхсем пирĕн тăван çĕршыв çине ултавлăн килсе тапăннă тăшмана çĕмĕрсе тăкма, ăна пĕтĕмĕшпех çапса аркатма пĕтĕм вăя мобилизацилеççĕ. Войков ячĕпе тăракан заводри рабочисем халĕ пĕр эрне хушшинче туса кăларакан конструкцисен хисепĕ вăрçăчен пĕр уйăх хушшинче туса кăларнă конструкцисен хисепĕпе танлашать. Çак заводри разметчиксем халиччен 10 кун хушши ĕçлесе тунă заданине халĕ виçĕ кун хушшинче тултарнă. Макеевкăри «Пролетарская-Крутая» шахтăри забойщик Сумин юлташ июлĕн 6-мĕшĕнче, хăйĕн канмалли кунĕнче 7 норма панă. Мускаври «Красный пролетарий» заводри сверловщица Галошина юлташ нормăна кашни кунах 250—275 процент тултарать. Ленинградри Егоров ячĕпе тăракан заводри конструкторсемпе технологсене Забунтуев, Григорьев, Хохлов, Пыжов юлташсемпе ытти юлташсене çĕнĕ аггрегат проектне хатĕрлеме задани панă. Икĕ кун иртсен вĕсем проекта йăлтах хатĕрлесе панă, июлĕн 7-мĕшĕнче вара аггрегатăн опытлă образецне туса çитернĕ. Днепропетровск облаçĕнчи колхозниксем тĕштырă, фураж, какай, сĕт тата ялхуçалăхĕн ытти продукчĕсене тиенĕ хĕрлĕ обозсем организацилеççĕ. Днепропетровск хули çумĕнчи районра нумай колхозсем 1942 çулти поставкăсен шучĕпе государствăна продуктсем пама пуçланă. Чăваш республикинчи çĕр колхоз ытла государство умĕнчи обязательствăсене пĕтĕмĕшпех тултарнă.

Фронт патĕнчи чугунçулсенчен пĕрин машинисчĕ Сулима юлташ васкавлă рейса тухса кайнă. Çул çинче поезд çине фашистсен самолечĕ тапăннă. Машинист хăвăртлăха ӳстернĕ те поезда вăрмана илсе кĕнĕ. Самолет уйăрăлса юлнă, анчах поезд вăрмантан тухсанах фашистла летчик пеме пуçланă. Сулима юлташ состава малалла илсе пынă. Станци патĕнче Совет Союзĕн икĕ истребителĕ сывлăша вĕçсе çĕкленнĕ. Темиçе минута иртсен фашистсен машини çĕр çине персе аннă.

* * *

Тĕнчери хаçат-журналсем Германи пропаганди «большевиксен тискерлĕхĕсем» пирки пуçран шухăшласа кăларнă сĕмĕр аташусенчен мăшкăлласа куласçĕ. Çапла, сăмахран, Америкăри «Дейли ньюс» хаçат хăйĕн вулаканĕсене нимĕçсен пропагандистла фотографийĕсем çине «шанмасăр пăхма» сĕнет. Нумай хаçатсем уççăнах çапла çыраççĕ: нимĕçсен фотографийĕсене Льовпа Каунасра мар, фашистла пропагандăн главнăй штабĕнче Берлинра хатĕрлеççĕ, вĕсем фальшивкăсем пулса тăраççĕ, гитлерла «фотографсен» ултавлă ĕçне уççăнах кăтартса параççĕ. Фотографине «юратакан» нацистсем тыткăна лекнĕ красноармеецсен «фотографийĕсене» февральпе март уйăхĕсенчех питĕ нумай хатĕрлесе хунă. Фотографисене ютçĕршывсенчи хаçатсем валли ярса панă чухне Германири пропаганда министерствин экспедицийĕ тыткăна лекнĕ красноармеецсене хĕллехи тумтирпе кăтартса паракан фотографисем хурса янă. Гитлерла агентура Совет Союзĕн çар флагне туртса илнĕ «çĕнтерӳллĕ» нимĕç войскисен фото-ӳкерчĕкне салатса панă пулнă. Чăннипе илсен çав флаг çамрăк пионерсен флагĕ пулнă. Флаг çине пионерсен эмблемине тата пионерсен «Хатĕр пул» текен лозунгне ӳкерсе хунă. Çакна май ĕнтĕ фашистсен фотографийĕсене уйрăмах ĕненми пулнă. Геббельс агентури çакнашкал сĕмĕр суя ĕçсем тăвать пулсан, вăл йывăр вăхăтсене пурăнса ирттерет пулмалла.

* * *

Совет пилочĕсем «дум-дум» пулясемпе усă куraççĕ текен, Совет Информаци Бюровĕ халичченех тăрă шыв çине кăларнă суя хыпара Берлинри радио çĕнĕрен сарать. Çак черетлĕ ирсĕр суя хыпар халиччен тăрă шыв çине кăларнă хыпартан пĕр çакăнпа кăна уйăрăлса тăрать: Берлинра шăратса кăларнă çĕнĕ «пуляемпе», йăлтах суяна тухнă фашистсен ирĕкĕпе, чугунçул составĕ çине мар, нимĕç салтакĕсем çине пенĕ пулать. Халиччене тăрă шыв çине кăларнă провокацийĕ суя хыпара нимĕçсем тепĕр хут сарни çакна кăтартса парать: гитлеровецсем хăйсен шухăшĕсене пытарма, хăйсен тискер ĕçĕсен йĕрĕсене шăлса лартма хăтланса çине тăраççĕ. Урса кайнă фашистсем черетлĕ ирсĕр элеке çак тĕллевпе шухăшласа кăларнă пулас: Гитлер командованийĕн авантюристла планĕсене ăнăçлăн çĕмĕрсе пыракан Совет авиацийĕн геройла ĕçĕсем нимĕç халăхĕ çине паракан влияние вăйсăрлатма тăрăшаççĕ.

Совет Информаци Бюровĕнчен

(Июлĕн 10-мĕшĕнчи ирхи пĕлтерӳ)

Июлĕн 9-мĕшĕнче кунĕпех тата июлĕн 10-мĕш ыран тенĕ чухне çĕрле Полоцк тата Новоград-Волынск енĕсенче пысăк çапăçусем пынă.

Остров енче пирĕн войскăсем противникăн мĕнпур атакисене сирсе янă, ăна пысăк сухатусем кӳнĕ.

Полоцк енче вăйлă çапăçусем пынă. Пирĕн войскăсем татăклă контратакăсем тăваççĕ.

Лепель енче пулса иртнĕ çапăçусенче пирĕн войскăсем Германи войскисен моторизованнăй дивизине, хĕрĕхе яхăн оруди, транспортнăй тата специальнăй машинисем нумай çĕмĕрсе тăкнă.

Борисов енче пирĕн чаçсем противник дивизийĕсенчен пĕрине чылаях пысăк поражени кӳнĕ.

Бобруйск енче пирĕн войскăсем хăйсем йышăннă позицисене çирĕп тытса тăраççĕ.

Новоград-Волынск енче пирĕн войскăсем противникăн пысăк вăйĕсене малалла кайма чарса тăраççĕ.

Фронтăн **Бессарабири** участокĕнче противник наступлени тунине хирĕç пирĕн войскăсем вăйлăн çапăçаççĕ.

Фронтăн ытти енĕсемпе участокĕсенче пысăк çапăçусемех пулман.

Пирĕн авиаци июлĕн 9-мĕшĕнче кăнтăрла иртсен противникăнне 100 таран танк пĕтерсе тăкнă тата июлĕн 10-мĕш ыран тенĕ чухне çĕрле Остров тата Новоград-Волынск енĕсенче противник войскисене хирĕç малалла çапăçнă.

* * *

Июлĕн 9-мĕш ыран тенĕ чухне çĕрле Германин «Юнкерс—88» йышши бомбардировщикĕсем, «Мессершмитт» йышши истребительсем хӳтлесе пынипе, фронтăн Н-ски участокне вĕçсе пынă, вĕсем хăйсен чаçĕсене наступлени тума хатĕрленес ĕçре пулăшасшăн пулнă. Бомбăсем пăрахмалли объект патне пырас çул çинче фашистсене совет летчикĕсем хирĕç тухнă та, пĕтĕ сӳлтен вĕçсе пырса немĕç самолечĕсем çине ыткăннă. Пĕрремĕш хут атака тусах бомбардировщиксен тата вĕсене хӳтлесе пыракан истребительсен стройне арпаштарса янă. Тĕттĕмпе усă курса, немĕç бомбардировщикĕсен соединенийĕн командирĕ çула улăштарма хăтланнă. Чееленме хăтланни ăнăçсăр пулнă. Тăшман самолечĕсене пурне те пĕтерсе тăкнă. Кăштах вăхăт иртсен немĕç самолечĕсен иккĕмĕш тата виççĕмĕш эшелонĕсем килсе тухнă. Сывлăшра çĕнĕрен вăйлă çапăçу пуçланса кайнă. Противника хăюллăн атакăласа, совет летчикĕсем Германи самолечĕсене пĕрин хыççăн теприне пере-пере антарнă. Пирĕн истребительсем пенинчен тарса хăтăлас тесе, фашистсен нумайĕш летчикĕсем кивĕ методпа усă курнă. Вĕсем ӳкнĕ пек тунă, ӳкнĕ çĕртен тӳрленсе çĕр çумне аялтан вĕçсе тарашăн пулнă. Çапла туни те вĕсенчен нумайĕшне çăлса хăварма пултарайман. Çапăçу тăшмана пĕтĕмĕшпех аркатса тăкнипе вĕçленнĕ. Тăшманăн 33 самолетне пĕтерсе тăкнă. Совет пилочĕсем 5 машина сухатнă. Вĕсен экипажĕсем парашютсемпе сиксе çăланнă.

* * *

Совет Союзĕпе Финлянди хушшинчи чикĕн пĕр участокĕнче белофинсем аялкран çаврăнса пырса красноармеецсен группине хуçăрласа илме хăтланнă. Хăюллă пулеметчиксем ефрейтор Дошматов тата красноармеец Осечкин тăшман хĕссе пынине темиçе сехет хушши сире-сире янă. Тарăхса кайнă фашистсем, хĕрлĕ боецсем хирĕç тăнине путарса лартас тесе, огнеметран персе пирĕн огневой точка çывăхĕнчи вăрмана тĕртсе янă, вара атака тума пĕр çĕре пухăнма пуçланă. Совет боецĕсем белофинсене атака чиккине пыма паман, хăюллăн контратакăна тухнă. Контратака тума юнашар подразделенин командирĕ лейтенант Рыжов пулăшнă. Белофинсене хăваласа янă, вĕсен 12 офицер тата 50 салтака яхăн вилсе юлнă.

* * *

Н-ски стрелковăй полк ефрейторĕ Квашин çапăçура геройла кĕрешнĕ. Вăйлăн персе тăнă вăхăтрах, вăл противник çыхăнуне татнă. Рота каялла чакнă чухне пулеметран тĕл персе фашистсем хĕссе пынине чарса тăнă. Шиксĕр ефрейтор çапăçуран пуринчен те кайран тухнă, вăл ротăн аманнă командирне лейтенант Авакова хăй çĕклесе пынă.

* * *

Батарея огневой позицине улăштарнă. Кĕçĕн сержантсем Бреевпа Попейко тата ефрейторсем Терещенкопа Качаев телефон линине сӳтнĕ. Çак вăхăтра вĕсем çине аялтан вĕçсе пырса фашистсен икĕ самолечĕ атакăланă. Боецсем пытанса выртнă та, противника винтовкăсенчен пеме пуçланă. Сулима юлташ состава малалла илсе пынă. Станци патĕнче Совет Союзĕн икĕ истребителĕ сывлăша вĕçсе çĕкленнĕ. Темиçе минута иртсен фашистсен самолечĕ тапăннă. Машинист хăвăртлăха ӳстернĕ те поезда вăрмана илсе кĕнĕ. Самолет уйăрăлса юлнă, анчах поезд вăрмантан тухсанах фашистла летчик пеме пуçланă. Сулима юлташ состава малалла илсе пынă. Станци патĕнче Совет Союзĕн икĕ истребителĕ сывлăша вĕçсе çĕкленнĕ. Темиçе минута иртсен фашистсен самолечĕ тапăннă. Вĕсен экипажĕсем парашютсемпе сиксе çăланнă.

* * *

Демин лейтенантăн застави противника ăнăçлăн сирсе янă. Тăшмана пысăк сухатусем кӳнĕ тата хăваласа янă. Пеме чарăннă, анчах красноармеецсем тăшман енчи кашни движенине çивĕччĕн сыхласа тăнă. Наблюдатель пралуксенчен карса тунă хӳме патне тăшманăн виçĕ салтакĕ шăвăнса пынине çинчен пĕлтернĕ. Командир вĕсене сывăха яма тата хатĕрленсе тăма приказ панă. Нимĕçсен хӳме патне çитнĕ пĕр салтакĕ пралук çине ӳт листи çакса хăварнă та, çийĕнчех каялла шуса кайнă. Хут листи çине нимĕç чĕлхипе: «Пĕттĕр юлă Гитлер! Германи халăхĕ Совет Союзне хирĕç вăрçастăн мар!», тесе çырнă.

* * *

Н-ски чаçĕн наблюдательнăй постĕнче июлĕн 8-мĕшĕнче 18 сехетре финн салтакĕсен пысăк мар группине асăрханă. Кĕçĕн сержант Веровăн мала янă отделенийĕ сывхарса килекен финсене тытса чарнă. Группăна ертсе пыраканĕ финн салтакĕ Тойво П. вĕсен роти Хĕрлĕ Çар енне куçма кăмăл туни çинчен пĕлтернĕ. Июлĕн 9-мĕшĕнче ирхине 2 сехетре финсен роти пĕтĕм составĕпе хăйсен ирĕкĕпе совет территорийĕ çине каçса килнĕ. Рота мĕнпур винтовкăсене, пулеметсемпе миномет-сем 10, пит нумай боеприпассем, çаван пекех тата сыхса лартнă тăватă шюцкоровеца панă. Шюцкоровецсем хушшинче пĕр лейтонант тата виçĕ унтер-офицер пур. Салтаксем финн халăхĕн йывăр пурăнăçĕ çинчен каласа панă. «Финн халăхĕнчен юлашки çăкăр тĕпренчĕкне туртса илеççĕ, — тесе каласа парать Тойво П., — эпир ĕнтĕ хăçан тăраничченех çинине те манса кайрăмăр. Пĕтĕм Финляндри халăхĕ выçă ларать. Чи юлашки тырпулсемпе выльăх-чĕрлĕхсене те немĕç çарĕ валли пуçтарса кайнă».

* * *

Отечественнăй вăрçăн кашни кунĕ ĕçри хастарлăхпа паттăрлăхăн çĕнĕ чаплă образецĕсемпе палăрса тăрать. Ленинградри пĕр заводра механически цехăн старший мастерĕ Шахнович юлташ ертсе пыракан участок ответлă детальсем туса хатĕрлеме задани илнĕ. Мирлĕ вăхăтра çакна тунă çĕрте 8 куна яхăн ĕçлемелле пулнă. Мĕнпур рабочисем хастарлăн тăрăшнипе сложнăй тата васкавлă заказа 15 сехет хушшинче хатĕрлесе çитернĕ. Сталинградри трактор заводĕнчи токарь Бородавкин юлташ талăкри заданине 500 процент тултарать. Гомельри вăрман комбиначĕн тарнăй цехри сверловщици Петренко юлташ норма тăрăх 510 деталь вырăнне сменăра 800 тата ытларах та туса хатĕрлет.

Н. станцинче паровозниксен бригадирĕ Вершилов юлташ çурма-военнăй формăна тумланнă çынна курнă. Çав çын пассажирсене паракан ыйтусем бригадирăн темĕнле иккĕленмелле туйăннă. Палламан çынна тытса чарнă. Вăл фашистла диверсант пулнă. Терлĕрен документсем хушшинче унăн сумĕнче виçĕ совет паспорчĕ тупнă. Совет патриочĕсен сыхăлăхĕ ултавлă тăшманăн мĕнпур чеелĕхĕсене тăрăшыв çине кăларма пулăшать.

Сталин юлташ Англи посолне г. Криппса йышăннă

Июлĕн 10-мĕшĕнче СССР Халăх Комиссарĕсен Совечĕн Председателĕ Сталин юлташ Англи посолне г. Криппса йышăннă.

Калаçура Ютçĕршыв Еçĕсен Халăх Комиссарĕ Молотов юлташ пулнă.

Калаçу сехет ытла пынă.

БОЕВОЙ ЭПИЗОДСЕМ

Паттăрлăхпа хăюллăх

Наступлени кăнтăрла ситеспе пуçланнă. Юханшывăн тепĕр енче пытанса выртакан Германи çарĕн войскисене çапса салатас тесе, старший лейтенант Александр Коломиец хăйĕн ротине шыв хĕррине илсе пынă.

Шывăн тепĕр енче симĕс вăрман. Вăрман çумĕнче Украина ялĕ. Çав лăпкă та тӳлек ялта фашистсем пытанса тăнă.

Александр Коломиец хăйĕн ротине айлăмран илсе тухса, пĕр сӳллех мар сăртлă тӳрем сине хăпарнă. Коломиец хăйĕн кĕрешӳри тусне — лейтенант Рябой юлташа хăйĕн взвочĕпе пĕрле шыв урлă каçса, противник тылне тухма приказ панă. Рябой взвочĕ малалла шунă. Чĕе тăшман çакна сиснĕ пулмалла, вăл Рябой юлташа та, красноармеецсене те хăй хыççăн илĕртсе, шыв хĕрринчен ял еннелле куçнă. Рябой взвочĕ ялалла кĕнĕ. Ялта пĕр сас-чĕв те илтĕнмен.

— Мĕнле-капла? Ниушлĕ неприятельсем çук кунта? — шухăшланă Рябой.

Ял лăпкă. Тӳлек. Анчах Коломиец, яланах çивĕч туйăмлăскер, çак тӳлек шăплăха пĕртте ĕненмен. Бинокль витĕр çивĕччĕн тинкерсе пăхнă, вара çакна курнă: сӳллĕ ыраш кашласа ларнă, тăшман çак ыраш хушшине чăмнă. Вăл пирĕн красноармеецсене хăй хыççăн илĕртсе кайса, вĕсене çавăрса илесшĕн пулнă.

Вăхăта вăраха яма май килмен. «Противникăн пĕчĕкленех хутшăнса пыракан ушкăнне хăвăртрах атакăлас пулать», — шухăшланă старший лейтенант.

Рота атакăна кĕнĕ. Атакăлакан красноармеецсем çинелле тăшмансен тылĕ енчен пулясем шăхăра-шăхăра иртме пуçланă. Рота сĕр çумне лăпчăнса выртнă. Хыçалта ларакан пӳрт чӳречи витĕр пережен фашистсене пĕтермесĕр малалла кайма май килмен.

Коломиец хăйĕн ротинчи сержант Тихомирова приказ панă:

— Гранатăна чӳрече çине!

Тискер тăшман чĕрдакран, пӳрт тӳпинчен, сарайĕнчен пеме пуçланă. Паллах, ку операцине хăвăртрах пĕтермелле. Ахалĕн шыв урлă каçса килнĕ Рябой взвочĕ пĕтме пултарать, противник хăй пире хирĕç наступление тухĕ.

Приказ татăклă:

— Килкартине вут тĕртмелле.

Тăшмансем пирĕн çинелле пĕр татти-сĕр персе тăнине пăхмасăр, Коломиец сарай патне чупса пырса, ăна вут тĕртсе янă. Улăм витнĕ сурт çийĕ хăвăртах чĕрĕлсе кайнă, хĕрӳ çулăм йывăç стенасене те ярса илнĕ, унтан хӳме çине куçнă. Пирĕн боецсен пăтăрлăхĕнчен хăраса фашистсем чĕтрене ернĕ, хăйсене хăйсем шанмасăр тăнă, иккĕленнĕ. Ирĕксĕрех вара тухса тармалла пулнă.

— Рота, малалла!

Боецсем фашистсене хӳтерме пуçланă. Вĕсем картасем урлă хăвăрттăн сике-сике каçнă, улăхсем урлă чупса иртнĕ.

Пирĕн ĕç — тĕрĕс ĕç, малалла..

Малалла... Малалла...

Çак çăмахсенче калама çук хăватлă вăй тапса тăрать, вăл сăмахсем пирĕн боецсене çĕнĕ çĕнтерӳсем тумăн хавхалантарассĕ.

Александр Коломиец сасартăк такăннă, чупас хăвăртлăха чакарнă, нумай та калйман — тăрăнса ӳкнĕ. Вăл ӳкнĕ çĕртен тăрасшăн пулнă, тăнă та — нумай та кайман, каллех ӳкнĕ. Çапах та вăл малалла упаленнĕ. Çав вăхăтрах вăл хăйĕн ротине малалла ертсе пынă.

Пăртак кайсанах вăл йĕплĕ хулă йывăççисен сайра тĕмисем патне шуса çитнĕ. Вара тин хăйĕн мускулĕсем ывăннине, вăй пĕтсе пынине сиснĕ. Унăн сулахай чĕркуçĕн хăйне итлемен: ни авăнман, ни тăсăлман.

— Амантрĕç, шуйттансем...

Боецсем наступлението мĕнле туса пыни, вĕсен хăвăрттăн вĕлтлетсе иртекен мĕлкисем лейтенант выртакан йывăç тĕмисем хушшипе аванах курăннă. Коломиец малалла кайма пултарайман, анчах унăн сасси çирĕп пулнă.

Вăрçа хăюллăн кĕрсе пыракан боецсене вăл çапах çивĕччĕн сăнаса тăнă, хăйĕн ротине команда пама çапах пăрахман. Кăшт вăхăт иртсен, лейтенант Александр Коломиец хăйĕн икĕ чавси çине таянса тăнă, хăйĕн роти шыв урлă каçса Рябой взвочĕпе пĕрле пĕтĕçнине, икĕ рота пĕрле пулса тăшмана хирĕç вăйлă наступлени тунине курнă.

* * *

Максим Зюкин, кĕçĕн лейтенант, хăйĕн подразделенине каялла çавăрма задани илнĕ. Пирĕн войскăсен тылне десант анса ларнă пулнă.

Приказ кĕске пулнă:

—Пирĕн подразделени çав десанта пĕтерсе тăкмалла.

Кам пĕлет, ăçта, хăш тĕле аннă-ши тăшмансен парашютисчĕсем; ăçта, хăш тĕле пытаннă-ши вĕсем? Шурлăха, ращана, çул хĕрринчи канавсене ухтарнă, — анчах никама та тупайман. Зюкин çывăхри йывăça хупăрласа илме шутланă. Подразделени малалла шунă, тăшман пырса тапăнасран хытă сыхланнă, тавралла хытă сăнаса итленĕ.

Зюкин инçех те мар çакна асăрханă: шоссе çинчи танкетка патĕнче красноармеец формипе тăхăннă çынсен ушкăнĕ лăпчăнса тăчĕ. Çав ушкăн патне çывхарса пыракан подразделени те çав картинăнах асăрханă. Вĕсенчен пĕри — чи вăрăмми, сарлака хулпуççиллĕскер, аллипе сулнă:

— Эй, килĕр кунта!

Камсем эсир?

— Советсемсех, хамăрăнни...

— Курмастăн-и?..

— «Хамăрăннисем», — шухăшланă кĕçĕн лейтенант. Вăл «хамăрăннисем» патне çывхарнă. Вĕсен çывăхне пынă май, тырă хушшинчен çар тумĕ тăхăннă çынсем пытанса йăпшăнинне асăрханă. Пирĕн подразделени çав чее тăшмансем тĕлне çитсенех, Зюкин нимĕç чĕлхипе команда панине илтнĕ. Тăшманăн тискер те улталăк ĕçне кĕçĕн лейтенант часах тавçăрса илнĕ. Вăл хăйĕн подразделенине çирĕп приказ панă:

— Çапăçăва!

Тĕрлĕ мансемпе пытанса тăракан чее фашистсем çине боецсем хыттăн пеме пуçланă. Тăшман танкетки пĕр пысăках мар çурт çинелле пыма пуçланă. Вăл çурт хыçĕнче пирĕн боецсем пытанса тăнă пулнă.

Зюкин çакăн çинчен оруди командирне пĕлтерме хăйĕн подразделенинчи пĕр красноармееца янă. Ку оруди Зюкин подразделенинчен мĕшпурĕ те 500 метрта çеç пулнă. Вăхăт нумай та иртмен, пирĕн оруди тăшман çинелле тăхлан сапма пуçланă. Халран тухнă танкетка кĕçех чарăннă.

Германи парашютисчĕсем ним тума аптранă енне, пĕр армана кĕрсе лăпчăннă. Вĕсем Зюкин подразделенийĕ çине пеме пуçланă.

— Армана пĕтерсе тăкмалла!

Подразделени хăйĕн пĕр красноармеецне çав арман патне янă. Анчах, вăхăт нумай та иртмен, подразделенинчен янă красноармеец каллех хăйĕн оруди командирĕ патне тавăрăннă. Минутăсем хăвăрт иртнĕ. Оруди нимĕн те чĕнмен. Шăп пулнă. Фашистсем пенĕ çемĕн персе тăнă, тăшман пуллисем хаярлансах пынă.

Кĕçĕн лейтенант Зюкин, çĕр çийĕн упаленсе, оруди командирĕ патне шуса пынă. Тăшмансем Зюкина асăрханă. Хаяр та чарусăр пулясем ун пуçĕ çинчен шăхăра-шăхăра иртнĕ. Зюкин çĕр çумне лăпчăннă, вăл татах малалла шунă. Тăшмансем хăш тĕлте тăни çинчен оруди командирне пĕлтерсе, кĕçĕн лейтенант каллех арман патнелле вирхĕннĕ. Вăл хăйĕн подразделенийĕ патне çитме те ĕлкĕрмен.. тăшман пытанса тăракан арман хăй вырăнчен айăккинелле ыткăннă. Кĕçех ăна хаяр çулăм хыпса илнĕ.

Çапла вара пирĕн красноармеецсем тăшмансен десантне ним юлмичченех пĕтерсе тăкнă.

Я. ЦВЕТОВ.

Действующи арми.

Боим тата Бочков художниксен ӳкерчĕкĕ. («Искусство» издательстви кăларнă плакатран тунă репродукци). ТАСС фотохроники.

Паттăрлăх тата çирĕплĕх

Боевой приказа пурнăçа кĕртнĕ пулнă. Тăшманăн объекчĕсенчен кăмăллаллăскер çĕмĕрĕк татăксем кăна юлнă. Çӳле вĕçсе хăпарса, бомбардировщик хăйĕн базине тавăрăннă.

— Сулахайра фашистла икĕ истребитель! — кĕтмен çĕртен пĕлтернĕ стрелок-радист Кузнецов юлташ

Самолет командирĕ Юр юлташ тăшман истребителĕсене хирĕç çапăçăва тухма килĕшнĕ. Вĕсем пĕр пек мар — пĕр бомбардировщик икĕ истребителе хирĕç. Сталинла соколсем хăйсенчен чылай йышлăрах тăшмана хирĕç пĕрремĕш хут кăна çапăçаççĕ-и?!

Тăшман истребителĕсем хăлат пекех, пирĕн самолет çине талхăрса вĕçсе пынă. Лейтенант Юр юлташ фашистсен шухăшне чухласа илсе, пĕлсе маневр тунă. Стрелок-радист Кузнецов юлташ пулеметăн гашеткине хĕснĕ. Пĕр «Мессершмитт» çулăм хыпса илнипе тинĕс çине сирпĕнсе аннă та тинĕс тĕпне путнă.

Тăшманăн иккĕмĕш самолечĕ пирĕн летчиксем пулеметран пенине тӳсеймессĕр малтан аяккалла кайнă, кун хыççăн вăл бомбардировщик çине çил-тăвăл пек персе атакăна кайнă. Çурăлса кайнă снарядпа совет самолечĕн сылтăм енчи плоскоçне сиенленĕ. Анчах та ку вăл мухтавлă летчиксене хăратман. Пулеметран пенипе вĕсем тăшман истребителĕ темиçе хутчен тунă хаяр атакăна сирсе янă, самолет унченхи пек маневрсем тума пултарайман.

Сывлăшри çапăçу 20 минута хушши пынă. Бомбардировщикĕ пулясемпе çăлтах шăтарса пĕтернĕ Радиостанци-стройран тухнă, плоскоçĕн чĕрĕкĕ татăлса ӳкнĕ, сулахайри мотор ĕçлеме чарăннă.

Машина кашни минутăрах хăйĕн хăвăртлăхне чакарнă. Фашистла истребитель çаплах атака тунă. Стрелок-радист Кузнецов юлташ хăйĕн самолечĕн стабилизаторĕ урлă тăшман çине пеме пуçланă, унăн хӳрине татнă. Çакă çапăçу ĕçне татса панă. Асса кайнă «Мессершмитт» çунатти çине таяннă, çулăм хыпса илнĕскер, аялалла ĕçсе аннă.

Аялта — тинĕс Тăван çĕршывăн çыранĕсем патне çитиччен тата 150 миль ытларах Сиенленнĕ самолет хăйне тытăкланине итлемест.

Çӳллĕш сахалтарах та сахалтарах. Çирĕм... Вуннă.. Пилĕк метр. Малашне вĕçме май çук. Летчиксем мотора ĕçлеме чарнă. Машина шыв çине йывăрăн пырса перĕннĕ те тепĕр минута çурăран шыва путнă Çак вăхăт хушшинче экипаж кабинăран тӳрех шыв çине тухма, спасательнăй резина шлюпкăна хăйсемпе пĕрле илме ĕлкĕрнĕ.

Летчиксем тинĕс çине нимĕн апатçимĕççĕр тата ĕçмелли шывсăр тăрса юлнă. Моховой йывăр комбинезонсем летчиксем темиçе сехет хушши тăрăшнă, анчах та çыран хĕрринчи хум вĕсене каялла илсе кайнă.

Сывлăшра мотор сасси илтĕнмĕн. Пирĕн разведчик вĕçнĕ. Ун çинчен шлюпкăна тата унта выртакан виçĕ çынна асăрханă. Самолет шыв çине анса ларнă, пĕччен ишекен шлюпка патне пынă.

Алăсене ăшшăн чăмăртанă, туссем пĕр-пĕрне ыталанă. Çĕнтерӳпе ырлăх суннă. Тивĕçлĕ кану.

Халĕ пĕтĕм экипажăн сывлăхĕ лайăх, алхасса кайнă тăшмана çапса аркатма çĕнĕрен вĕçсе çекленме хатĕр.

— Çĕр! Пирĕн, хамăрăн Совет çĕрĕ! — тесе савăнса кăшкăрнă геройсем.

Вăйлăрах ишме хăтланнă, анчах куптан нимĕн те тухман Шыçса кайнă аллисем арăн-арăн шываран çӳле çекленнĕ, каялла нимĕн вăйсăр аннă.

Виççĕмĕш кун та вĕçне çитет, çыранĕ халĕ те кăшт кăна курăнать.

Каллех тепĕр асаплă каç иртнĕ. Халĕ ĕнтĕ çыран 80—100 метрта кăна, анчах та ун патне çитме вăй пулман. Çак нумай мар растоянине каçасшăн летчиксем темиçе сехет хушши тăрăшнă, анчах та çыран хĕрринчи хум вĕсене каялла илсе кайнă.

Иккĕмĕш каç çитнĕ. Çак виçĕ пăттăр çын стихийăна хирĕç тĕлĕнмелле вăйпа кĕрешнĕ. Аллисене тăвар çисе янă, вĕсем вутри пек пулнă. Выçлăх тата шыв ĕçсе килни тӳсме çук асаплантарнă.

Çак кĕрешӳн виççĕмĕш кунĕ çитнĕ. Тинĕс çинче сывлăш уçăлнă. Çил вăйланнă. Шлюпкăна шыв тултарма пуçланă, ăна йăвантарса ярас хăрушлăх кашни минутăрах шиклентернĕ. Шыва тăкма тытăннă, анчах ку та пулăшман, вăйсене те сыхласа хăварас пулать.

Юлашкинчен инçетрен çыран курăннă.

— Çĕр! Пирĕн, хамăрăн Совет çĕрĕ! — тесе савăнса кăшкăрнă геройсем.

Вăйлăрах ишме хăтланнă, анчах куптан нимĕн те тухман Шыçса кайнă аллисем арăн-арăн шываран çӳле çекленнĕ, каялла нимĕн вăйсăр аннă.

Виççĕмĕш кун та вĕçне çитет, çыранĕ халĕ те кăшт кăна курăнать.

Каллех тепĕр асаплă каç иртнĕ. Халĕ ĕнтĕ çыран 80—100 метрта кăна, анчах та ун патне çитме вăй пулман. Çак нумай мар растоянине каçасшăн летчиксем темиçе сехет хушши тăрăшнă, анчах та çыран хĕрринчи хум вĕсене каялла илсе кайнă.

Сывлăшра мотор сасси илтĕнмĕн. Пирĕн разведчик вĕçнĕ. Ун çинчен шлюпкăна тата унта выртакан виçĕ çынна асăрханă. Самолет шыв çине анса ларнă, пĕччен ишекен шлюпка патне пынă.

Алăсене ăшшăн чăмăртанă, туссем пĕр-пĕрне ыталанă. Çĕнтерӳпе ырлăх суннă. Тивĕçлĕ кану.

Халĕ пĕтĕм экипажăн сывлăхĕ лайăх, алхасса кайнă тăшмана çапса аркатма çĕнĕрен вĕçсе çекленме хатĕр.

— Тутапа вĕрсе хăпартмалла!

Паттăр та хăюллă виçĕ летчик шыра шапăртатса, пĕрин хыççăн тепри шлюпкăна нумай вăхăт хушши вĕрсе хăпартнă. Тыткалама çăмăл пултăр тесе меховой комбинезонсене тата урана тăхăнмаллисене те хывма тивнĕ.

Çапах та шлюпкăна вĕрсе хăпартнă. Пурте ун çине кĕрсе ларнă.

Пĕлĕт çинче çăлтăрсем çутатма тытăннă, штурман çăлтăрсем тăрăх ăçталла каймаллине хăвăрт палăртнă. Весласем пулман пирки алăпа ишнĕ. Шлюпка вăрахăн малалла кайнă.

Вăхăт плтĕ асаплă иртнĕ. Çынсем çакна анланнă: çирĕп пулни, лăпкă пулни, вăйлă пулни кăна вĕсене тăван çĕршывăн çыранĕсем патне илсе пыма пулăшма пултарать.

Ир пулнă Хырăм выçни вĕсене чылаях систернĕ, шыв ĕçсе килни вĕсене питĕ хытă асаплантарнă. Вăйсем хавшасах пынă. Парăнма юрамасть. Малта мирçе сехет, мирçе кун? Вăйсене сыхласа усрамалла, кĕрешмелле.

Кăнтăрла иртнĕ хыççăн уçă çил вĕрме тытăннă, шлюпкăна силлеме пуçланă.

— Давай, комбинезонсенчен парус тăваттăр, — сĕнӳ панă Юр.

Кăвак комбинезонсене хăвăрт сурнă, кирлĕ çĕрте сыхнă. Икĕ çын бортсем çине тăнă, хăйсем тунă паруса сарнă Çил ăна тултарнă, шлюпка хăвăртрах малалла кайнă.

Çапла вĕсем темиçе сехет хушши ишнĕ. Хĕвел анас умĕн çил лăпланнă, каллех алăпа ишме тытăннă.

Сывлăшри мотор сасси илтĕнмĕн. Пирĕн разведчик вĕçнĕ. Ун çинчен шлюпкăна тата унта выртакан виçĕ çынна асăрханă. Самолет шыв çине анса ларнă, пĕччен ишекен шлюпка патне пынă.

Алăсене ăшшăн чăмăртанă, туссем пĕр-пĕрне ыталанă. Çĕнтерӳпе ырлăх суннă. Тивĕçлĕ кану.

Халĕ пĕтĕм экипажăн сывлăхĕ лайăх, алхасса кайнă тăшмана çапса аркатма çĕнĕрен вĕçсе çекленме хатĕр.

«КРАСНЫЙ ФЛОТ».

Харăс тăчĕ пирĕн халăх

1. АСЛĂ СТАЛИНШĂН, ÇĔРШЫВШĂН!

Ял-ял урлă, хир-хир урлă
Сарăлчĕ усал хыпар:
Юнлă йытă—Гитлер урнă,
Çĕршыва тăкать кăвар.
Харăс тăчĕ пирĕн халăх.
Юлташсем, утар хаваслăн,
Юлташсем, вĕçер патвар ăн,
Юлташсем, перер хаярăн! —
Кĕл пулса фашизм вĕçтĕр,
Пурте хытă çĕмĕрер, —
Юнлă йытă — урнă Гитлер
Вилĕм туптăр ĕмĕре.

Аслă Сталиншăн, çĕршывшăн —
Емĕрхи телей парнишĕн
Малалла утар хаваслăн,
Малалла вĕçер патварăн,
Тăшмана перер хаярăн!

2. АСТУ, ЮЛТАШАМ!

Кăвак тӳпе таса пулсан та,
Ялан асту, ялан тĕпче!
Куçран та хаклăрах сыхлантăр
Тăван çĕршыв, тăван тĕнче.

Иртет-и пĕлĕт е хуркайăк,
Карталлăн курăнать сана.
Ан шан, юлташăм, тишкĕр лайăх! —
Ыйтать хăватлă самана.

Пĕрне те ĕненмесĕр эсĕ
Бинокль витĕр асăрха
Пытанчăк сăнлăн систермесĕр
Ан килтĕр фашистла çăхан!

Çакна ыйтать санран сĕршывăм,
Ыйтать тăван уй-хир, вăрман.
Пурте, пурте пуласшăн сывă.
Пурте вăл санăн! Эс ан ман!

Санран ыйтать юратнă Сталин,
Ыйтать телейлĕ самана.
Сӳлте хаяр тăшман сахал-пĕ!
Асту!
Шанчăкăмăр сана!

3. СЫХЛАР, ПАТТАР ТĂВАНСЕМ!

Кӳлнĕ пĕкĕ çӳллĕш тырă
Хумханать, çилсем вĕрсен;
Тутă пулĕ, пулĕ ырă,—
Сыхлăр, паттăр тăвансем!

Кӳлĕре сикет сар пулă,
Çăралаççĕ çарансем.
Енесен сĕчĕ пит çуллă,—
Сыхлăр, паттăр тăвансем!

Шăпчăксем çĕрле хаваслăн
Юрласа хĕпĕртесен,
Савăнса итлетĕр халăх, —
Сыхлăр, паттăр тăвансем!

Сăлкара сикеççĕ пирĕн
Чип-чипер ачамăрсем.
Вĕсене эсир типтерлĕн
Сыхлăр, паттăр тăвансем!

Тыр-пула тăшман ан тивтĕр,
Ан çулайтăр çарана.
Шăпчăк юррине ан илттĕр. —
Сыхлăр, паттăр тăвансем!

Я. УХСАЙ

Тăшман пĕтмеллех

ÇĔМĔРЛЕ. Оборонăн Государственнăй Комитечĕн Председателĕ И. В. Сталин радио тăрăх тухса каланă сăмахсемпе хавхаланса, Çĕмĕрле хулинчи ĕççыннисем хĕрлĕ площаде митинга пуçтарăнчĕç. ВКП(б) райкомĕн секретарĕ Павлов юлташ, митинга уçса, ВКП(б) Чăваш Обкомĕн секретарĕне Пивоваров юлташа сăмах парать.

Пивоваров юлташ Совет çĕршывĕ умне тухса тăнă хăрушлăх çинчен, анчах паттăр Хĕрлĕ Çар тăшмана çирĕп отпор парса пыни çинчен, Сталин юлташ пĕтĕм Совет Союзĕнчи ĕççыннисен умне кăларса тăратнă задачăсем çинчен тĕплĕн каласа парать.

— Пĕтĕм Совет халăхĕ отечественнăй вăрçа тухрĕ. Чăваш республикинчи ĕççыннисем те, ытти тăванлă республикăсенчи ĕççыннисем пекех, тăван çĕршывăн, Ленин—Сталин партийĕпĕн, аслă Сталинăн пĕр тумлам юнолмиччен çапăçма хатĕр,—тет Пивоваров юлташ.

Малалла Пивоваров юлташ пирĕн кашнинне вăрçă ĕçне вĕренмелли çинчен, сыхăлăхлă, организацилле, дисциплинăллă пулмалли çинчен, хĕрарăм-патриотăсен фронта кăлкансен вырăнĕсене тăрса тăрăшса ĕçлемелли çинчен чарăнса тăрать.

— Пирĕн ĕç — тĕрĕс ĕç, тăшман пĕтмеллех! Çĕнтерӳ пирĕн алăра пулать!

Древкомбинатри рабочисемпе инженерно-технически работниксен тата служащисен ячĕпе митингра Орешников юлташ сăмах калать.

— Эпир отечественнăй вăрçă вăхăтĕнчи кунсенче пурнатпăр, ку вăл пирĕн çине хамăр çĕршыва сыхлас тĕлĕшпе пысăк ответлăх хурать, — тет Орешников юлташ.

— Енер пирĕн комбинат коллективĕ ниçанхинчен те тимлĕрех ĕçлеме, революциллĕ сисĕмлĕхе тата вăйлатма, большевикла организацилле çирĕплĕн пăхăнса тăма тупа турĕ,—тет вăл. Унтан Орешников юлташ комбинат коллективĕ пана сăмаха пурнăçа кĕртсе пыни çинчен калать.

— Енер стахановка Малахеева сменăри нормăна 4 хут, комсомолец Никифоров 3 хут ытла иртерсе тултарчĕç. Кусем пек ĕçлекенсем пирĕн комбинатра çĕршерĕн шутланаççĕ.

Орешников юлташ хыççăн митингра хулари интеллигенци ячĕпе Оборин юлташ, комсомолецсемпе çамрăксен ячĕпе Егоров юлташ сăмах каларĕç.

Митингри çынсем пурте пĕр саслă пулса халăхсен çулпуççĕ — Сталин юлташ патне çыру яма йышăнчĕç.

Хар. ЛИСИН.
(«Чăваш Коммуни» корр.).

Производствăллă çĕкленӳ хăпарса пырать

Ир. Колхоз правленийĕнче канцелярине çынсем пыраççĕ. Унта вĕсем колхоз председательне е бригадирсене тĕл пулса, çĕнĕ нарядсем ыйтаççĕ:

— Паян мĕнле наряд пулать?

Колхозра иртен пуçласа каçченех ĕçлеççĕ: çум çумлаççĕ, уборкăна хатĕрленеççĕ. Хăйсене хăйсем ку ĕçсене тунă чух отечественнăй вăрçăри боецсем пек, фронтри ывăлĕсемпе упăшкисем тата пиччĕшĕсем пек туяççĕ.

Уйхирте тухăçлă тырпул çитĕнет. Тухăçлă тырпулăн тата ăна пĕр тăкаксăр пухса кĕртессишĕн кĕрешни тăшмана хăвăртрах çĕмĕрсе тăкассишĕн кĕрешнирех пулать.

Çак кунсенче колхозран виçĕ боец—иккĕмĕш бригадăн бригадирĕ Степан Иванов, тимĕрçĕ Алексей Архипов тата шофер Георгий Мышкин юлташсем фронта тухса кайрĕç.

— Эсир, — терĕç вĕсене колхозниксем, — пирĕн çĕршыв çине вăрă-хурăхла тапăнса кĕнĕ тăшмана çапса аркатăр. Эпир кунта, тылра, фронта валли мĕн кирлине пурне те хатĕрлĕпĕр, государство умĕнчи обязательствăсене срокчен тултарăпăр. Çĕнтерӳ пирĕнте пулĕ!

Колхозра та, заводсенче станоксем умĕнчи пекех, фронта кайнă арçынсем вырăнне хĕрарăмсем тăраççĕ. Колхозри конюхсем Иван Яковлевпа Иван Михайловăн çак кунсенче фронта кайнăлла. Ку конюхсен вырăнне юлма хĕрарăмсем палăртса хунă. Иван Яковлев вырăнне хăйĕн йăмăкĕ Евгения Яковлева юлать.

Петр Иванов колхозра тавăрлă ферма заведующийĕ пулса ĕçлет. Паянхи пекех фронта кайма повестка кĕтсе тăрать. Вăл хăйĕн вырăнне юлма Александра Андреева юлташа вĕрентсе хатĕрлет, хăйĕн ĕçĕсемпе паллаштарать. Александра хăй те фермăра чылай вăхăт ĕçлет, сыснасем пăхать.

Екатерина Павловăпа Александра Павлова ĕнесем пăхаççĕ. Вĕсем хăйсен ĕçĕсене юратса, тӳрĕ кăмăлпа туса пыраççĕ. Государствăна сĕнӳ тăратас 1941 çулхи плана пĕтĕмпех тултарчĕç, ăна çитес çулпăн пама тытăнчĕç.

Колхозра производствăллă çĕкленӳ кулленех хăпарса пырать. Çум çумлаççĕ, уборкăна хатĕрленеççĕ. Хăйсене хăйсем ку ĕçсене тунă чух отечественнăй вăрçăри боецсем пек, фронтри ывăлĕсемпе упăшкисем тата пиччĕшĕсем пек туяççĕ.

Уйхирте тухăçлă тырпул çитĕнет. Тухăçлă тырпулăн тата ăна пĕр тăкаксăр пухса кĕртессишĕн кĕрешни тăшмана хăвăртрах çĕмĕрсе тăкассишĕн кĕрешнирех пулать.

Çак кунсенче колхозран виçĕ боец—иккĕмĕш бригадăн бригадирĕ Степан Иванов, тимĕрçĕ Алексей Архипов тата шофер Георгий Мышкин юлташсем фронта тухса кайрĕç.

— Эсир, — терĕç вĕсене колхозниксем, — пирĕн çĕршыв çине вăрă-хурăхла тапăнса кĕнĕ тăшмана çапса аркатăр. Эпир кунта, тылра, фронта валли мĕн кирлине пурне те хатĕрлĕпĕр, государство умĕнчи обязательствăсене срокчен тултарăпăр. Çĕнтерӳ пирĕнте пулĕ!

Колхозра та, заводсенче станоксем умĕнчи пекех, фронта кайнă арçынсем вырăнне хĕрарăмсем тăраççĕ. Колхозри конюхсем Иван Яковлевпа Иван Михайловăн çак кунсенче фронта кайнăлла. Ку конюхсен вырăнне юлма хĕрарăмсем палăртса хунă. Иван Яковлев вырăнне хăйĕн йăмăкĕ Евгения Яковлева юлать.

Петр Иванов колхозра тавăрлă ферма заведующийĕ пулса ĕçлет. Паянхи пекех фронта кайма повестка кĕтсе тăрать. Вăл хăйĕн вырăнне юлма Александра Андреева юлташа вĕрентсе хатĕрлет, хăйĕн ĕçĕсемпе паллаштарать. Александра хăй те фермăра чылай вăхăт ĕçлет, сыснасем пăхать.

Екатерина Павловăпа Александра Павлова ĕнесем пăхаççĕ. Вĕсем хăйсен ĕçĕсене юратса, тӳрĕ кăмăлпа туса пыраççĕ. Государствăна сĕнӳ тăратас 1941 çулхи плана пĕтĕмпех тултарчĕç, ăна çитес çулпăн пама тытăнчĕç.

Колхозра производствăллă çĕкленӳ кулленех хăпарса пырать. Çум çумланă çĕрте тата колхозри ытти ĕçсене тунă çĕрте колхозниксем ĕç нормисене ытлашшипех тултарса пыраççĕ

Ефремкасси, «1-е Мая» колхоз, Элĕк р. (Хамăр корр.).

Колхозниксен ĕçри хастарлăхĕ

СĔНТĔР. Районри колхозсенче чăнчăн советлă патриотизм движенийĕ кунран-кун хăватлăн сарăлса пырать. Кашни колхоз, кашни бригада, звено тата кашни колхозникпе колхозница, шкул ачи, урса кайнă фашистла бандăсене çапса аркатма, социализмлă тăван çĕршыва çирĕплетессишĕн кĕрешме хатĕр тăрать. Пирĕн мухтавлă Хĕрлĕ Çар, Тинĕс-Çар Флочĕ тата Хĕрлĕ Авиаци фронтра тунă çитĕнӳсем колхозниксемпе колхозницăсене колхозра нихăçанхинчен те пысăк тухăçлăхпа ĕçлеме хавхалантарассĕ.

«Париж Коммуни» колхоз членĕсем государство умĕнчи обязательствăсене срокчен тултарнипе пĕрлех, тырпулсене уйхиртен пухса кĕме те хатĕрленсе çитрĕç. Çак кунсенче çĕнĕрен 18 стан урапа турĕç, 30 минăç çĕлерĕç, икĕ жнейка юсаса лартрĕç. Колхозăн пионерсем пысăк пулăшу параççĕ. Уйхирсенĕ çумкурăксенчен тасатнă чухне колхозри пионерсем 5 кун хушши уйра ĕçлерĕç.

Молотов ячĕпе тăракан колхоз 1941 çулăн государствăна аш-какай парса татнă хыççăн 1942 çулăн 11,19 центнер пачĕ.

«Çĕнĕ Юнга», «Çĕнĕ çул» колхозсен, Пăлăлукасси ялсоветне кĕрекан тата Ярославкăри колхозсен членĕсем çĕнĕ заемăн укçа тӳлесе татрĕç. Вĕсем çак юлашки 7—8 кун хушшинче 50 пин тенкĕ яхăн укçа пухса перекет кассине кайса хывнă.

П. ЯРГУНЬКИН.

Комсомолецсем колхозра тăрăшса ĕçлеççĕ

ÇĔМĔРЛЕ. Вăрман-Тăванри «Самолет» колхозри комсомолецсем ялхуçалăх ĕçĕсене тăмăн туса пыраççĕ. Терентьев, Миронов, Иванов, Мостайкина, Чимбиркина, Щемекова комсомолецсем колхоз производствинче уйрăмах лайăх ĕçлеççĕ. П. Терентьев юлташ пăянхи кун тĕлне 162, Т. Миронов 139 ĕçкуне тунă.

А. АФАНАСЬЕВ.

Н-ски авиачăсĕн çитĕнĕвĕсем

ДЕЙСТВУЮЩИ АРМИ, июлĕн 7-мĕш. (ТАСС спецкорĕ). Юратнă çулпуçа Сталин юлташа тупа тунине—тăшмана нимĕн хăвармиччен çĕмĕрсе тăкма пулнине пурнăçа кĕртсе, июлĕн 3-мĕшĕнче Рудаков юлташ подразделенийĕнчи летчиксем боевой ĕçсен журналĕ çине тăшманăн икĕ самолетне персе ӳкернипе тата самолетне персе ӳкернĕ тата теприне тыткăна илнипе çырса хунă.

Тепĕр кунне—июлĕн 4-мĕшĕнче — противника хирĕç сывлăшра пулнă çапăçура пирĕн летчиксем тăшманăн татах виçĕ самолетне пĕтерсе тăкнă. Вăрçă ĕçĕсем пуçланнăранпа Рудаков юлташăн геройла подразделенийĕ тăшманăн 33 самолетне персе ӳкернĕ тата тепĕр самолетне пирĕн аэродром çине антарса лартнă.

Фашистла самолета персе ӳкернĕ

ДЕЙСТВУЮЩИ АРМИ, июлĕн 7-мĕш. (ТАСС спецкорĕ). Н-ски полкăн батарейи çĕнĕ позици çине куçнă. Кĕçĕн сержантсене Бреев, Попейко тата ефрейторсене Терещенкопа Качаев юлташсене телефон сыхăнăвне йĕркелеме хушнă. Вĕсем пĕр минута та кая юлмасăр, заданине пурнăçа кĕртме тытăннă

Кĕтмен çĕртен сывлăшра тăшманăн икĕ самолечĕ курăннă. Фашистла машинăсем аялтан вĕçсе пырса, сержант Бреев группине пеме тытăннă. Анчах та боецсем хăраса ӳкмен.

— Пытанмалла! Пăшалсенчен пемелле! — тесе команда панă Бреев. Противникăн пĕр самолетне персе ӳкернĕ, летчиксене тыткăна илнĕ.

Хĕрарăмсем çар ĕçне вĕренеççĕ

КУКЕÇ. Район центрĕнчи хĕрарăмсем оборона ĕçне пиçсе вĕренеççĕ. Çак кунсенче 54 çын ГСО значокĕн нормисене пачĕç. Вĕсем санитарнăй дружина организацилерĕç.

Фронтра медицина работникĕсем пысăк вырăн йышăнса тăнине шута илсе, медработницăсем Смирнова, Карпеева, Михайлова тата Васильева юлташсем хăйсене фронта яма ыйтаççĕ.

П. НИКИТИН.

Тăшмана çĕмĕрсе тăкма, Хĕрлĕ Çарпа пĕрле, пĕтĕм халăх çĕкленсе тăчĕ

Фронтра çĕкленӳ тума кашни çын пулăшать

ЭЛЕК. Хăрушă сехет килсе çитрĕ. Вăрă-хурахла ĕçсем туса пурăнма хăнăхнă ултавçă, кĕçех питлĕ Гитлерăн фашистла йыттисем сиксех туллашаççĕ. Вĕсем пирĕн иккĕр миллионлă халăхăн телейлĕ пурнăçне юнпа вараламă ĕмĕтленеççĕ. Анчах фашистсен тискер ĕмĕчĕ нихăçан та пурнăçа кĕрес çук!

Хĕрлĕ Çара фронтра çĕнтерӳ тума кашни совет гражданинĕ мĕн вăй çитнĕ таран пулăшать. Охверкăри «Хăват» колхоз членĕ И. Калмыков каçалхи пур обязательствăсене те парса татнă. 1942 çулăн 15 килограмм ашкакай панă. Н. Воронковпа Н. Коннов юлташсем ялхуçалăх налогĕпе страховка укçисене пĕтĕмĕшпех тӳленĕ. Вĕсем çитес çулхишĕн те 60—80-шар тенкĕ панă.

Колхозниксем тырпулсене пăхса ӳстерес тĕлĕшпе тимлĕн ĕçлеççĕ. 100 гектар çуртри çинчи çумкурăксене çумласа тасатнă. Çак кунсенчех уборкăна хатĕрленсе çитеççĕ.

Колхозра кирпĕч тăвакан бригада пур. Кунта та пысăк çĕкленӳпе ĕçлени сисĕнет. Ф. Васянка юлташ лашапа тăм турттарать, тăм çăрать. Вăл хăйĕн кормине кулленех 300—400 процент тултарать. 70 çулти С. Ефремов та нормăна 125 процент тултарать.

—Эпĕ ватă пулин те ырми-канми ĕçлетĕп. Пирĕн вăй тăван çĕршыв обороннине тата та ытларах çирĕплетме, фашистла агрессорсене тĕп туса хунă çĕре кайтăр, — тет вăл.

Н. ДМИТРИЕВ.

Тăшмана вилĕм кĕтет

ВĂРНАР. Çак кунсенче Уравăшри «Майăн 1-мĕшĕ» колхозри колхозниксемпе колхозницăсен митингĕ пулса иртрĕ. Ирсĕр фашистсем пирĕн тăван çĕршыв çине вăрă-хурахла тапăннине колхозниксем пĕтĕм чĕререн сивлесе ылханаççĕ. Митингра йышăннă резолюцире колхозниксем çакăн пек çыраççĕ:

«Фашистла Германи пирĕн чечекленсе пыракан çĕршыв çине тапăннине, Германи фашисчĕсен ирсĕр ĕçне чĕререн тарăхса ылханатпăр. Колхоз производствинче татах та вăйлăн ĕçлесе, хамăрăн юратнă Хĕрлĕ Çара, Тинĕс-Çар Флотне тата Авиацине ялан пулăшса тăратпăр. Государство умĕнчи обязательствăсене срокчен тултарса пыратпăр, 1941 çулти Виççĕмĕш Пятилеткăн (тăваттăмĕш кăларăм) Заем укçине сывăх вăхăтрах пĕтĕмпех парса татăпăр. Колхозăн вăйлăн çитĕнекен тырпулне пĕр пĕрчине тăкказламасăр хăвăрт пуçтарса кĕрĕпĕр.

Сывă пултăр Совет Правительстви!

Сывă пултăр никам çĕнтерейми паттăр Хĕрлĕ Çар!

Сывă пултăр халăхсен юратнă çулпуçĕ Аслă Сталин!»

Çакăн пек пирĕн колхозниксен пĕтĕм кăмăлтан тулса çитнĕ çиллипе калани ылхануллă сăмахĕ.

Тăшман хăйне валли вилĕм тупĕ.

П. ИВАНОВ.

Пурте Хĕрлĕ Çара пулăшма!

ÇЕМĔРЛЕ. («Чăваш Коммуни» корр.). Районри колхозсенче тырпулсене уйран пухса кĕме хатĕрленеççĕ. Кашни колхоз тухăçлă тырпул туса илме ĕмĕтленет. Улхаш ялсоветĕнчи «1-ое Мая» колхоз иртнĕ çулта вăтам шутпа кашни гектар пуçне 22 центнер ытла тĕштырă туса илнĕ. Кăçал татах та ытларах тырпул туса илессишĕн кĕрешеççĕ.

Эпир тухăçлă турпула туса илнипе хамăрăн паттăр Хĕрлĕ Çара, Хĕрлĕ Флота пулăшатпăр. Уйри тырпула пĕр тăкказламасăр пухса юртме пулатпăр, — теççĕ колхозниксем.

Ворошилов ячĕпе тăракан, «Подборное», «Труд», «Красный Октябрь» колхозсем те кăçал гектартан 100 пăтран кая мар тĕштырă туса илме ĕмĕтленеççĕ. Халĕ вĕсем хĕрсех уборкăна хатĕрленеççĕ.

Чылай колхозсем государство умĕнчи парăмсене срокчен парса татаççĕ, çакăнпа вĕсем паттăр Хĕрлĕ Çара пулăшаççĕ. Егоркинăри «Большевик» колхоз 1941 çулăн государствăна 55,32 центнер ыраш тата 1 тонна сĕлĕ пачĕ. Çавăн пекех, государствăна Савадеркинăри «Авангард» колхоз 35,04 центнер сĕлĕ, Тăван ялсоветĕнчи Буденный ячĕпе тăракан колхоз 11,38 центнер сĕлĕ, «Вперед» колхоз 51,59 центнер ыраш тата тулă пачĕç. «Подборное» колхоз сĕт-çу, çăмарта, аш-какай памалли çулталăк планне ытлашшипех тултарчĕ.

Улхаш ялсоветĕнчи Ворошилов ячĕпе тăракан колхозăн кăçал государствăна обязательнăй йĕркепе 839 штука çăмарта памалла, паянхи куна вăл 841 штука панă, аш-какай памалли обязательствăна та ытлашшипех пурнăçланă.

«Волга» колхоз членĕсем аслă çулпуç Сталин юлташ чĕнсе каланине ответлесе, уборкăна лайăх хатĕрленме, государство умĕнчи обязательствăсене срокчен пурнăçласа пыма пулчĕç. Халĕ колхозра ĕç хĕрӳллĕн пырать: çум çумлаççĕ, ялхуçалăх машинисене юсаççĕ, чылайăшĕсем тата çул çинче, вăрманта ĕçлеççĕ. Колхоз 1941 çулăн государствăна аш-какай, сĕт-çу парса татрĕ.

Уйрăм ялсоветсем укçа-тенкĕ пухас тĕлĕшпе малта пыраççĕ. Магарин ялсовечĕ II-мĕш кварталти финанс планне 277,7 процент, Анат-Кăмаша ялсовечĕ — 164,6 процент, Хутар — 148,7 процент, Мыслец ялсовечĕ 751,6 процент тултарчĕç. «Красный Октябрь» колхоз членĕсем çĕнĕ заема 4.475 тенкĕлĕх сыраннă, халĕ вĕсем укçине пĕтĕмпех парса татрĕç. «Красная звезда» колхоз членĕсем те çĕнĕ заем укçине пĕтĕмпех тӳленĕ.

— Пурте тăван çĕршыва сыхлама, юратнă Хĕрлĕ Çара пулăшма! — çакăн пек шухăш-кăмăлпа пурăнаççĕ халĕ колхозниксемпе колхозницăсем. Вĕсен ĕçри хастарлăхĕ куллен ӳссе пырать.

Уборкăна хатĕр

ЕЛЧЕК. Хĕрлĕ Сыртри «Красное знамя» колхоз членĕсем вăйлă тырпула пухса кĕме лайăх хатĕрленсе пыраççĕ.

Гитлеровецсен — урса кайнă йытăсен киревсĕр ĕçне хирĕç çапăçакан мухтавлă Хĕрлĕ Çара колхозниксем колхоз производствинче стахановла ĕçленипе пулăшаççĕ. Тырпула уйхиртен пухса кĕрес тĕлĕшпе çакăн пек ĕçсем тунă: кашни бригадăрах жнейкăсене ремонтланă, молотилкасене вырнаçтарса лартнă, 28 лаша валли урапасем туяннă, 180 михĕ çĕнĕрен çĕлеттернĕ. Уйхирте ĕçленĕ чухне колхозниксене вĕри апат ситермешкĕн 32 центнер çăнăх, 7 центнер кĕрпе, аш-какай хатĕрлесе хунă.

Колхозри бригадăсенче стена хаçатсем йĕркелĕ тухаççĕ, бригадăсем уйри тырпула пухса кĕме мĕнле хатĕрленсе пынине çинчен яланах сутатса тăраççĕ. Колхозра халĕ ачаллă хĕрарăмсене ĕçе явăстарас майпа ачасем валли ялсĕ уçма хатĕрленеççĕ.

Производствăллă çĕкленӳ кулленех вăйланать. Колхозри пĕр звено вунă кун хушшинче 12 пин кирпĕч çапса 20 çĕнĕ кĕмеллĕх вите туми тытăнчĕ. Ытти витесене те ремонтлана.

Çапла ĕнтĕ, Гитлер хăйĕн юнлă аллисене совет çĕрĕ патнелле тăснине хирĕç колхозниксем нихçанхинчен те тачăрах пĕтĕççе, ĕç тухăçлăхне темиçе хут ӳстерсе ответлеççĕ.

А. ДУДКИН.

Эрех заводĕнчи работницăсем санитарнăй дружина организацилеНĕ. УКЕРЧĔК ÇИНЧЕ: дружина занятийĕнче (Шупашкар хули).

К. БАБАЕВ фото-ӳкерчĕкĕ.

АСЛАТИ

Вутлă çăмăр çăвать,
Аça çапать,
Вăрçă вучĕ шăрт-шарт
Шартлатать.
Хăрушă аслати
Кĕмсĕртетет,
Фашизм тĕппипех
Кисренет.

Гитлер шур куçĕпе
Тискер пăхать,
Аманнă тигр пек
Çуйăхать.
Фашизм кунçулĕ
Çапла пӳтсĕр,
Юнлă та куççуллĕ,
Ĕмĕтсĕр.

Çĕмĕр, çĕмĕр юнлă
Фашистсене,
Аркат çапса, паттăр
Хĕрлĕ Çар!
Социализмăн
Хумĕсене
Анлăрах та анлă
Сарса яр!

Н. ШЕЛЕБИ.
Чăваш халăх поэчĕ.

Малта пыракан çынсем парти ретне кĕреççĕ

ШАХАСАН. Урса кайнă фашистла вăрçă провокаторĕсем пирĕн тăван çĕршыв çине вăрçăпа тапăннине хирĕç Совет Союзĕнчи ĕççынисем отечественнăй вăрçа çĕкленчĕç. Вĕсем Ленин — Сталин партийĕ тавра татах та тăрăх пĕтĕçрĕç, коммунизм ĕçĕпĕн, тăшмана хирĕç юлашки юн тумламĕ юлмиччен çапăçма тупа турĕç.

Районри малта пыракан служащисемпе колхозниксем Ленин — Сталин партийĕн ялавĕ айне тăрса, тăшмана хирĕç пыракан çапăçусенче хастарлăн кĕрешме сăмах параççĕ. Хыçалкасри «Трактор» колхоз членĕ Г. Павлов юлташ производствăра яланах аванă ĕçлесе пынă. Ана халĕ ВКП(б) членĕн кандидатне илнĕ.

— Çак хисеплĕ ята илни, — тет Павлов юлташ, — манăн хастарлăха ӳстерчĕ. Эпĕ хамăрăн тăван çĕршывшăн, аслă Сталинăн юлашки юн тумламĕ юлмиччен çапăçма пулатăп.

Çак июль уйăхĕнче ВКП(б) райкомĕ районта малта пыракан «Новая жизнь» колхоз председательне П. Матвеев юлташа ВКП(б) членĕн кандидатне илчĕ. Матвеев юлташ ертсе пыракан колхоз государство умĕнчи пур обязательствăсене те тултарчĕ.

— Эпĕ,—тет Матвеев юлташ, — Хĕрлĕ Çара мĕн кирлисене пурне те паратăп, уйри тырпула кĕске срокра, пысăк пахалăхпа пухса кĕртме пулатăп. ВКП(б) членĕсен ретне Ворошилов ячĕпе тăракан колхоз председательне И. Филиппов юлташа, Атнашри финагента А. Сорокин юлташа, Троицк ялсовет исполком председательне С. Миронова юлташа илнĕ.

В. ЧЕРНОВ.

Шупашкарти сборнăй пунктра. МобилизацилеНĕ военнообязаннăйсем фронта тухса каяс умĕн политинформаци итлеççĕ.

– А. КОСТИН фото-ӳкерчĕкĕ.

Пысăк хастарлăх

КРАСНОАРМЕЙСКОЕ, июлĕн 7-мĕш. (Телефон тăрăх). Оборонăн Государственнăй Комитечĕн Председателĕ И. В. Сталин июлĕн 3-мĕшĕнче радио тăрăх тухса каланă сăмах районри ĕççыннисене пурне те калама çук пысăккăн интереслентерчĕ. Халăхсен çулпуçĕ, пирĕн пысăк çĕнтерӳсен организаторĕ Аслă Сталин радио тăрăх тухса каланă ятпа районра мĕншĕн предприятисемпе учрежденисенче, колхосченче нумай çынлă митингсем пулса иртеççĕ. Ку митингсенче тухса калакансем пурте пирĕн Хĕрлĕ Çарпа Тинĕс-Çар Флочĕ тата Хĕрлĕ Авиаци гитлерла тискер кайăксене ним юлмиччен пех çапса салатассине Совет халăхĕ чĕререн шанса тăнине, пирĕн халăх хамăрăн паттăр Хĕрлĕ Çара, Флота тата Авиацине пулăшма яланах хатĕр тăнине кăтартса параççĕ.

Районри нумай колхозсем хăйсен государство умĕнчи обязательствисене срокченех тултарас тĕлĕшпе хĕрсех ĕçлеççĕ. Паянхи кун тĕлне Карайри «Красная звезда» колхоз—88 центнер, Алманчри «Родина» колхоз—46 центнер, Янкасри «Волга» колхоз—50 центнер, Кужарти Буденный ячĕпе тăракан колхоз—40 центнер тырă леçсе панă. Государствăна 1941 çулăн аванс шучĕпе тырă парасси районри ытти пур колхозсенче те анлăн сарăлса пырать.

«Красная звезда», «Волга», «Калиновка», «Чăмăш», «Оборона» тата Тельман ячĕпе тăракан колхозсем государствăна 1941 çулăн памалли аш-какая пĕтĕмпех парса татнă. Çак асăннă колхозсем 1942-мĕш çулăн та аш-какай пама туçланă.

«Венера», «Прогресс», «Коминтерн», «Красноармеец», «Свобода» колхозсем государствăна обязательство тăрăх çăмарта парассине пĕтĕмпех пурнăçланă. «Сила» колхоз сӳс-кантăр парса татнă.

МТС-ри рабочисемпе служащисен митингĕнче хĕрарăмсен трактор бригадин бригадирĕ стахановка-трактористка У. Николаева юлташ çапла калаçрĕ:

— Германин урса кайнă фашисчĕсем пирĕн телейлĕ çĕршыв çине килме ĕмĕтленни аçалех пулать. Пирĕн мухтавлă, паттăр Хĕрлĕ Çар ирсĕр тăшмансене нихăçан та парăнман, малашне те парăнас çук. Пирĕн ĕç—тĕрĕс ĕç. Пирĕн тыл гранит пек çирĕп. Эпир, хĕрарăмсем, фронта кайнă арçынсем вырăнне тăрса, вĕсем вырăнне хамăрăн аппасемпе йăмăксене тăратса, хамăрăн упăшкасемпе пиччĕсене, шăллăмăрсене фронтра çĕнĕ çĕнтерӳсем тума, тăшмансене ним юлмиччен çапса салатма пулăпăр.

Чăнах та, У. Николаева юлташ ертсе пыракан бригада хăйĕн нормине яланах ытлашшипех тултарса пырать.

И. ХАТАЕВСКИЙ.

Тăван çĕршыва сыхлама хатĕр

Сталин юлташ радио тăрăх тухса каланă чухне: «Пирĕн хамăрăн пĕтĕм ĕçе халех вăрçă вăхăтне тивĕçлĕ пек урăхлатса çĕнетме, тырпулсене пухса кĕрессине кăтартуллă организацилеме пулчĕç. Вăйлă тырпулсене пĕр тăкказламасăр пухса кĕмелле. Хамăрăн тăван çĕршыва тата Хĕрлĕ Çара хуть те хăш вăхăтра та кирлĕ чухлĕ çăкăр, аш-какай тата ытти продуктсем памалла. Çакăн пек задачăсем тăраççĕ пирĕн умра. Эпир çак задачăсене пурнăçлатпăпăр.

Эпир халĕ, пурте пĕр çын пек пулса, çар ĕçне вĕренме тытăнтăмăр.

Агроном Н. КОНДАКОВ.

Вăрă-хурахсен йăвин вăрттăнлăхĕсем

1932 çул пынă. Мюнхенра «Коричневый дом» текен çуртăн залĕсенчен пĕринче пысăк мар, анчах та ăшă компани пуçтарăннă. Унăн хуçисем, Германи фашисчĕсем, çынсене вĕлерсе, вут тĕртсе çунтарса тата тĕрлĕрен ултавлă майпа Германири власа хăйсен аллине илмен пулнă пулсан та, «Коричневый дом» унчухне хăйне палла кăларнă.

Мюнхенри «Коричневый дом» фашистсен вăрă-хурахла йăви, бандăн штаб-хваттерĕ пулнă, çав банда хăйне рабочисен юнĕпе, ултавлă, жуликла, вăрă-хурахла ĕçсемпе вараланма тата ĕлкĕрчĕ ĕнтĕ. Çав кичемĕн хурăнса ларакан çуртăн, тӳрĕ кăмăллă халăхăн нимĕçех йĕркĕнсе пăхакан çуртăн, залĕсенчен пĕринче çынсен пысăк мар ушкăнĕ ларнă, çав ушкăнри кашни çынăх урăххи çинчен пит нумай каласа кăтартма пултарнă, вĕсене преступленилле ĕçсен вăрттăнлăхĕ çыхăнтарса тăнă. Унта фашистла бандăн пуçлăхĕ Адольф Гитлер пулнă, унăн тусĕ Дарре пулнă, фашистла деятель, Данцигри сенат председателĕ Герман Раушниг пулнă, Рудольф Гесс — Гитлерăн пĕрремĕш советникĕ пулнă.

«Чунтан» каласпа. Ку каласу — вăрттăн каласу, тесе — асăрхаттарнă Гитлер. Ана пĕтĕм тĕнчерен çеç мар, тата хăйсен, фашистла партин членĕсенчен те пытармалла.

Çак шăпăлăхри каласу Германири рабочи класпа мĕнпур ĕççыннисене хирĕç, Европăна хирĕç, малта пыракан этемлĕхе хирĕç, Совет Союзне хирĕç тунă заговор пулнă.

Вĕсем хăйсем хушшинче мĕнле пытармасăр каласнине пĕлмен те пулăтăмăр. Анчах вăрă-хурахла шайккăсен яланхи историйĕ çавăн пек ĕнтĕ: тупнисене валеçмесĕрех, бандитсем пĕрпĕрне ӳсса палăртаççĕ.

Раушниг Гитлер патĕнчен Гесс тариччен тахăçан малтанах тарнă. Фашистсен вăрă-хурахла банди арканма пуçлани чĕлхесене ӳсса янă. 1939 çулта Раушниг Парижра «Гитлер сказал мне» ятлă кĕнеке кăларнă. Çав кĕнекерен вăл хăйĕн малтанхи тусне тăрă шыв çине кăларать. Вăл «Коричневый дом»-ра 1932 çулта пулса иртнĕ каласу çинчен те каласа парать.

Раушниг мĕн çинчен каласа пани тĕрĕс-и-ха? Çак фашист пулнăскерне ĕненмелле-и-ха?

Çак ыйтусем çине пурнăç ответлет. Германи фашисчĕсен вăрттăн шухăшĕсене вĕсен пĕтĕм тĕнчене курăнса тăракан ĕçĕсемпе танлаштарса пăхас пулать.

Германия пĕтĕм тĕнче тĕлĕшпе пуçпулса тăмалла, тесе каланă Гитлер. Çакна валли мĕн тумалла-ха? Киреке средствăсемпе те, нимĕн умĕнче те чарăнса тăмасăр, çакна тумалла: Германире пĕтĕм власть, нимĕнле пуçлăсемĕр, фашистсен аллинче пулмалла.

Германия пĕтĕм тĕнче тĕлĕшпе пуçпулса тăрасси вăл — чи малтан фашистсем мĕнпур нимĕççем, тĕлĕшпе пĕтĕмĕшпех пуçпулса тăни пулать. Фашистсем вĕсем — господасем. Ытти мĕнпур нимĕççем, чи малтан рабочи класс, — пăхăнса тăраканнисем, чурасем.

Гитлер çапла каланă:

— Эпĕ ытти халăхсем Германи халăхĕпе пĕртан правăллă пулассине нихăçан та йышăнмастăп. Пирĕн мисси ытти халăхсене пăхăнтарасси пулать. Германи халăхĕ тĕнчене çĕнĕ класс пама тивĕçлĕ.

Гитлерăн сĕмĕр шухăшĕпе туса хунă çак çĕнĕ «тĕнче» мĕнлескер пулмалла-ха? Çав çĕнĕ «тĕнчен» социальнăй стройĕ мĕнле пулать-ха?

Гитлер çав ыйтусем çине ответ панă:

— Эпĕ сире пулас социальнăй строй мĕнле кӳрăнса тăмалли çинчен каласа парăп. Вăл стройра господасен класĕ пулать. Национал-социалистла партин тĕрлĕрен членĕсен, начальство енĕпе сыпăкăсем тăрăх вырнаçса тухнă членĕсен массисем вăтăм классене кĕмелле. Унтан тата çав стройра ятсăр-мĕнсĕр çынсем, ĕмĕр-ĕмĕр тарçăсем пулса пурăнакан çынсем питех те йышлăн пулмалла... Тата аялтаранра пирĕн çĕнсе илнĕ чужестранецсен класĕ, эпир кучухнехи чурасем тесе калакан çынсен класĕ пулмалла. Вĕсене пурне те пăхăнтарса тăраканнипе вара çĕнĕ, çӳлти аристократи пулмалла...

Гитлер çак ыйтăва малтанах курса тăрать: çĕршер миллион чурасене мĕнле пăхăнтарса тытса тăмалла-ха, мĕнле майпа пĕтĕм тĕнчене чурасем туса хумалла?

Гитлер çапла ответлет: чурасем нимĕн те ан пĕлччĕр, нимĕн çинчен те ал ăнланччăр, вулама ан пĕлччĕр. Вăл хăйĕн тусĕсене—бандитсене çапла каланă:

— Эпĕ культура е воспитани тесе калакан ыйту патне çывхарса пыратăп.. Пурне те тивĕç образовани тесе каланине яланлăхах пĕтерсе хумалла. Пурне те тивĕç образовани вăл—ял... Эпир аялта тăракан классен калама çук йышлă массине хутпĕлменлĕхĕн ырлăхне паратпăр...

Фашистла бандитсем хăйсен атаманне итленĕ тата ăна пулăшнă. Дарре, хăй енчен, хресченсене пусмăрта усрамалли çĕнĕ программа çăрса пынă. Германире тата ăна пăхăнса тăракан çĕршывсенче хресченсен пĕтĕм çĕрне туртса илсе, ăна помещиксен пысăк именийĕсем тăрăх валеçсе тухмалла. Нимĕç-дворянсем хăйсен батракĕсем тĕлĕшпе патшасем пулмалла. Шăпах ĕнтĕ çак помещикле дворянство, тесе каланă Дарре, Германия пĕтĕм тĕнче тĕлĕшпе пуçпулса тăрассине пурнăçламалли суйласа илнĕ лайăх май пулса тăрать.

Çак тискер сăмахсем — çынсен асса кайнă пĕчĕк ушкăнĕн тĕлĕкĕ çеç пулса тăраççĕ-и тен? Тен, çаксене йăлтах Раушниг шухăшласа кăларнă?

Çук, апла мар. Çак асса кайнă пĕчĕк ушкăна Германири банкрота тухнă капиталистсемпе помещиксем пулăшнă. Рабочи класран хăраса, Германири буржуази çĕршыври власа пачах этем сăн-сăпатне çухатнă тискер банда аллине панă.

Гитлер шăпах çав программăна, «Коричневый дом»-ра шăпăн, хăйсен çыннисем те илтмелле мар шăпăн, каланă программăна пурнăçа кĕртсе пырать те ĕнтĕ.

Германире фашистла бандитсен террорĕ алхасать. Германи халăхĕ хăех Гитлер режимне «коричневая чума» тесе ят панă. Çак чума Германи халăхĕн чи лайăх ывăлĕсене туртса илсе, вĕсемпе тĕрмесене, концентрацилле лагерьсене шăнăçайми тултарса лартнă. Палачăн пурти аслă çĕршыв çинче Гитлер власĕн эмблеми пулса тăнă. Халăхăн вăйĕсене выçлăх лăчăртать. Империализмлă вăрçă халăха йăлтах ывăнтарса çитернĕ, анлă массăсене çавтери тарăхтарса янă. Гитлер вăрçа хăвăрт вĕçлесе Германие çĕнтерӳ пама пулни — юрăхсăр палкани çеç. Вăрçа пуçлама йывăр пулман, ăна кирек-мĕнле авантюрист та тума пултарать. Анчах вăрçа ăнăçлăн вĕçлеме йывăр, Гитлершăн пулсан вара вăл пачах та пурнăçа кĕмеллескер мар.

Европăн, Африкăн чылай пысăк пайĕ юнпа вараланă ĕнтĕ. «Коричневый дом»-ра мĕн çинчен лĕпĕртетни майĕпен пурнăçа кĕрсе пынă пек туйăнать. Апла пулсан, Раушниг тĕрĕс пулнă. Вăл Гитлерпа унăн тарçисен тискер каласăвĕсене хăй тĕллĕн шухăшласа кăларман пулнă.

Аваланса, хуçаланса тата упĕтленсе, Цезарь тĕкĕрĕ умĕнче Гитлер плащне çиçет. Вăл çĕнĕрен чуралăхла Рим туса хурать. Римăн официальнăй диктаторĕ Муссолини те Гитлер вассалĕ пулса тăнă. Фашистла тиран урисем айĕнче Европăри государствăсем — вăйпа ирĕксĕрлесе туртса илнĕ, пăхăнтарса пĕтернĕ, сăнчăрласа лартнă государствăсем: Чехословакия, Франция, Польша, Бельгия, Голландия, Дания, Норвегия... тăраççĕ. Вĕсем умĕнче Румыни, Финлянди правительствисем чуралла шăвăнаççĕ. Чурасем тунă вăл, анчах та вĕсене нистан та мар, Европăри сутăнчăкла, йĕрĕнчĕкле, çĕрсе çитнĕ буржуази хушшинчен çеç тунă.

Мăнкăмăлланса кайнă властителĕн пуçĕ çавăрăнать, çав вăхăтрах хăранипе унăн чĕри те пăчăртанать. Пусмăра кĕртсе ӳкернĕ халăхсем хăйсене чурасем вырăнне шутламаççĕ. Çавăн пекех Германири нимĕççем те хăйсене чурасем вырăнне йышăнмаççĕ. Унта халăх тарăхăвĕ ӳссех пырать. Фашизмăн ăссăр та преступленилле политикине хирĕç протест тăвасси вăйланасах пырать.

Германи фашизмĕн ертсе пыракан çыннисене те шанчăксăр шухăш çавăрса илсе пырать. 1932 çулти пĕр палла кунра Гитлерпа пĕрле пулнă çынсен пĕчĕк ушкăнĕнчен Раушниг та тухса тарнă, Гесс та тарнă.

Чехири, Польшăри, Норвегири, Бельгири, Голландири, Данири, Францири, Югославири, Грецири халăхсем хăйсене ниçта çын та чурасем вырăнне йышăнмаççĕ тата нихăçан та чурасем пулмĕç. Фашизм çине пĕтĕм чĕререн тарăхни Гитлер тылĕнче взрыв тумалли тĕлĕнмелле хăватлă вăй пулса чăмăртанса пырать.

1934 çулта ВКП(б) XVII съездĕнче Сталин юлташ рабовладельчески строй туса хума хăтланакан фашистсен ăсран тухнă çыннисене çапса аркатмалах хак панă. Сталин юлташ фашистсен çавăн пек политикĕсем çинчен каларĕ, вĕсем акă мĕнле «...шухăшлаççĕ: вăрçăна «çӳлти раса», калăпăр, Германи «раси» «аялти расăна» хирĕç — пуринчен малтан — славянсене хирĕç организацилемелле, теççĕ, çакăн пек вăрçа кăна положенирен тухмашкăн май пама пултарать, мĕншĕн тесен «çӳлти расăн» «аялтине» лайăхлатса пымалла, ăна хăй аллинче тытса тăмалла, теççĕ. Калăпăр, çакăн пек тĕлĕнмелле теорие, пĕлĕт çĕртен аякра тăнă пекех наукăран аякра тăраканскерне, — калăпăр, çакăн пек тĕлĕнмелле теорие ĕçе кĕртсе пыма пуçланă пултăр. Мĕн пулса тăма пултарать-ха çакăнтан? Паллă ĕнтĕ, авалхи Рим та халăхи германецсемпе французсен авалхи йăхĕсем çине халăхи «çӳлти раса» представителĕсем славян йăхĕсем çине пăхнă пекех пăхнă. Паллă ĕнтĕ, авалхи Рим çав йăхсем çине: вĕсем «çӳлти расăсене», «аслă Рима», ĕмĕрлĕхех пăхăнса тăма тивĕçлĕ «аялти раса», «варварсем» тесе пăхнă, çав вăхăтрах, — хамăр хушăра каланă пултăр, — авалхи Римăн çапла тума хăшпĕр сăлтавсем те пулнă, халăхи «çӳлти раса» представителĕсем çинчен вара сăкна калама çук. (Тăвăллăн алă супаççĕ). Анчах мĕн тухрĕ-ха çакăнтан? Çакăнтан акă мĕн тухрĕ: римлян маррисем, ӳрăхла каласан, мĕнпур «варварсем» хăйсен пĕр тăшманне хирĕç пĕрлешсе тухса, Рима аçа-çиçĕм пек çапса ӳпĕнтерчĕç. Ыйту тухса тăрать: ăçта-ха вара халăхи «çӳлти раса» представителĕсен ĕмĕчĕсем те çавăн пекех ăнăçсăр результатсем патне илсе çитерес çуккине шантаракан гаранти? Ăçта-ха вара Берлинри фашистла литературăри политиксем авалхи Римăн ютçĕршывсене туртса илес тĕлĕшпе циçĕхсе çитнĕ çынсенчен телейлĕрех пулассине шантаракан гаранти? Паллах тепĕр майлă пулĕ тесе шухăшлани тĕрĕсрех пулмĕ-и?» (И. Сталин, «Вопросы ленинизма», изд. 11, стр. 432).

Совет çĕршывĕнчи халăхсен гениллĕ руководителĕ малтанах пĕлсе халăни халĕ ĕнтĕ пурнăçа кĕрсе пырать.

Цезарь пек пулма хăтланакан тăмкамит-Гитлер совет чиккисем çине тапăнать, Европăн хĕвелтухăç пайĕнче фашизм валли вилĕм шырать. Вăл ăна тупать!

Аташса кайнă авантюриста, хăйĕн тискер шухăшĕсене пурнăçа кĕртес тĕллевпе миллионшар çынсен пурнăçĕпе преступниклĕ выляканскерне, Совет халăхĕ пĕтерсе тăкатех.

Д. ЗАСЛАВСКИЙ.

Совет Союзĕн çар миссийĕ Лондона пырса çитнĕ

ЛОНДОН, июлĕн 9-мĕш. (ТАСС). Ĕнер Лондона Совет Союзĕн çар миссийĕ пырса çитнĕ. Мисси составне çаксем кĕреççĕ: генеральнăй штаб начальникĕн заместителĕ генерал-лейтенант Голиков, Главнăй тинĕс штаб начальникĕн заместителĕ контр-адмирал Харламов тата ытти сем.

Вокзалра мисси членĕсене ăшă кăмăлпа кĕтсе илнĕ. Поезд пырса çитнĕ тĕле платформа çине Англи хĕçпăшаллă вăйăсен верховнăй командованийĕн представителĕсем пухăннă, вĕсем шутĕнче: имперски генеральнăй штаб начальникĕн заместителĕ генерал-лейтенант Поунолл, сывлăш-çар вăйăсен штаб начальникĕн заместителĕ вице-маршал Боттомли, тинĕс-çар вăйăсен штаб начальникĕн заместителĕ контр-адмирал Филипс тата ытти офицерсем. Вокзалра çавăн пекех тата Совет Союзĕн Лондонри посолĕ Майский юлташ тата совет посольствин ытти представителĕсем пулнă.

Англи хĕçпăшаллă вăйăсен представителĕсем мисси членĕсене саламланă.

Совет Союзĕн çар миссине Иден йышăннă

ЛОНДОН, июлĕн 9-мĕш. (ТАСС). Июлĕн 9-мĕшĕнче ирхине Англи ютçĕршыв ĕçĕсен министрĕ Иден Совет Союзĕн çар миссине йышăннă. Совет посолĕ Майский юлташ Идена мисси членĕсемпе паллаштарнă. Çакăн хыççăн Майский тата миссин икĕ членĕ Идена уйрăм калăçу иртрĕнĕ. Унтан миссине çар министрĕ Мерджессон йышăннă.

Англи авиацийĕ Германири хуласем çине пырса тапăнни çинчен тĕплĕн пĕлтерни

ЛОНДОН, июлĕн 9-мĕш. (ТАСС). Англири информаци министерстви июлĕн 8-мĕш ыран тенĕ чух çĕрле Англи самолечĕсем Германири промышленноçлă хуласем çине пырса тапăнни çинчен тĕплĕн пĕлтерет. Кельн, Оснабрюк, Майна çинчи Франкфурт, Мюнхен-Гладбах тата Мюнстер хулисем çине тапăннă çĕре Англи самолечĕсен пысăк соединенийĕсем хутшăннă. Самолетсен ытти соединенийĕсем Хĕвеланăç Германири промышленноçлă хуласемпе коммуникацисем çине пырса тапăннă. Пуринчен ытла Кельн çине пит вăйлăн тапăннă, унта, бомбăсем пăрахнипе, юханшывăн икĕ енче те взрывсем пит нумай пулнине палăртнă. Пушарсем те нумай тухнă, бомбăсем пăрахма чарăнас умĕн пĕтĕм хулана тĕтĕм çавăрса илнĕ. Уйăх тулса çитни Англи летчикĕсене бомбăсем пăрахнин результатчĕсене сăнаса тăма май панă. Англи самолечĕсем Оснабрюк çине вĕçсе пырсан, хулара малтан пырса бомбăсем пăрахнипе тухнă пушарсем çав-çавах çутални курăннă. Англи бомбардировщикĕсем чугунçул склачĕсем çине бомбăсем пăрахнă. Бомбăсенчен нумайĕшĕ тĕл тивнине палăртнă. Англи летчикĕсем паровоз деповĕсем тата вагонсен пĕтĕм составĕсем çуннине курни çинчен пĕлтернĕ. Майна çинчи Франкфуртри, Мюнхен-Гладбахри чугунçул узелĕсем çине те бомбăсем пăрахнă. Вюнстер хули виçĕмĕш каç çунать ĕнтĕ. Иртнĕ каçсенче пырса бомбăсем пăрахнă районсем йăлтах ишĕлсе арканнă. Калама çук пысăк пушарсем пулнипе уйрăм бомбăсем ӳксе саланса кайнине те уйăрса илме йывăр пулнă. Складсене çĕмĕрсе тăкнине палăртнă. Чугунçул станци сывăхĕнчи аэродром çурчĕсенче пушарсем тухнине палăртнă. Çавăн пекех чугунçул склачĕсем çине те чылай бомбăсем тĕл ӳкнине палăртнă. Главнăй вокзал çуртне çĕнĕрен сиен тунă.

Сербири фашистла çарату

Ютçĕршывсенчи хаçатсем фашистла захватчиксен Сербири вăрă-хурахла çаратăвĕсем çинчен пĕлтереççĕ. Югославине туртса илнĕ хыççăн, фашистла бандитсем çапла пĕлтернĕ: çĕршыври мĕнпур тырă запасĕсем, тырă акнă мĕнпур çĕрлаптăкĕсем Германи аллине куçаççĕ, тенĕ. Гитлер ставленникĕ — «Германи хуçалăхĕн Сербири представителĕ» Файхаузен тырă акнă мĕнпур çĕрлаптăкĕсене, тырпула тата пĕтĕм выльăх-чĕрлĕхе шута илме, продовольстви запасĕсене Германие туртса каймашкăн тытăнма приказ панă. Гитлерла захватчиксем çакнашкал намăса пĕлмесĕр хуçаланнин практикăллă результатĕсем часах палăрнă. Çĕршывра выçлăх пуçланать. Белградра кукурузăран пĕçернĕ çăкăр татки тутăма та йывăр. Рынокра какай тупма май çук, çимелли ытти продуктсем те йăлтах пĕтнĕ. Серби халăхĕ çĕнĕ тырпул çине шанса тăма пултараймасть. Германи çар влаçĕсем çĕнĕ тырпула уйранах поездсем çине тиесе Германие ăсатас тĕлĕшне хатĕрленме пуçланă та ĕнтĕ.

Ютçĕршыв корреспонденчĕсен черетлĕ пресс-конференцийĕнче

Ютçĕршыв корреспонденчĕсен июлĕн 9-мĕшĕнче пулнă черетлĕ пресс-конференцийĕнче Совет Информаци Бюровĕн начальник заместителĕ С. А. Лозовский юлташ Финлянди правительстви-сен суя заявленийĕсем çинче чарăнса тăнă. Финлянди правительĕсем Финляндия «оборонăллă» вăрçă вăрçнă пек кăтарта парас шутпа фальшивкăсен «шурă-кăвак» кĕнекине кăларнă.

Финн правительĕсем Финляндирен ССР Союзне хирĕç кĕрешмелли плацдарм туса хурасси çинчен, хăйсем Гитлерпа тахçанах калаçса татăлни çинчен, калакан тĕрĕслĕхе пытарма май çук факта пытарасшăн. Нимĕç войскисемпе нимĕç хĕçпăшалне тахçанах Финляндине турттарса пыма пуçланă.

Хăйĕн правительствин çак предателле выступленийĕ финн халăхне кĕтмен çĕртен пырса тивнĕ. Тытăкăна лекнĕ финсем, вăл шутрах шюцкоровецсем те, çапла пĕлтереççĕ: Финляндия Германи хĕсĕрленипе наступлени пуçланă.

Тытăкăна лекнисем пурте çапла калаçççĕ: вĕсем Совет Союзне хирĕç вăрçма шухăшламан тата вăрçасшăн пулман.

Тытăкăна лекнĕ финсенчен пĕри мĕнпур финсен çак шухăш-кăмăлĕ çинчен çапла каланă: «Финн халăхĕн калама çук пысăк пайĕ Финляндия çăкăр тата ытти таварсем илсе тăма пултарнă пĕртен-пĕр çĕршыва Совет Союзне хирĕç вăрçă вăрçасшăн пулман».

Çакăнтан паллă ĕнтĕ: Германия Совет Союзĕ çинĕ тапăннă çĕре хуттăшнине Рюти, Таннер тата Маннергейм хăйсен халăхĕ умĕнче тӳрре кăларма пултарас çук.

Берлин саракан суя хыпарсене характеристика парса, Лозовский юлташ Геббельсăн «юлашки çĕнĕ ĕçне»—Берлин шухăшласа кăларнă çак пĕлтерĕве кăтартса парать: ССР Союзĕпе США хушшинче Камчаткăна тата Приморье крайне США-на парасси çинчен калаçусем пыраççĕ имĕш.

Çак суя сенсацин тĕллевĕ уççăнах курăнса тăрать: нимĕçсем Совет Союзне хăйĕн кӳршисемпе хирĕçтерсе яма шутлаççĕ. Çакăн пек расчет акă мĕн çинче никĕсленсе тăрать: японецсем хăйсене нимĕçсем мĕн пĕçерсе параççĕ, çавна пурне те çăтса яраççĕ имĕш. Ахӑль мар ӗнтӗ Гитлер «Мейн кампф» кĕнежере (1940 çулти издани) Япони культури хăйне уйрăм культура мар тесе калать. «Кӳчухнехи Япони ăталанăвĕ хăйĕн пурнăçĕшĕн ариецсен çăлкуçне тав тума тивĕçлĕ» тесе каласа, Гитлер çапла пĕлтернĕ: Япони халăхне тата Япони расине «культура сумне çыпçăннă» теме пулать, анчах та ăна «культура тăвакан» халăхпа раса теме нихăçан та май çук.

Германи пропаганди Камчаткăпа Приморье пирки шухăшласа кăларнă черетлĕ элек çакна кăтартса парать: Гитлер ют çын аллипе кăвар туртассăн, анчах ăна вăл тăваяс çук.

Юлашкинчен Лозовский юлташ халĕ пулса иртекен çапăсусен характерĕ çинчен калакан ыйту çинче чарăнса тăнă. Фронтри событисем сарăлса пынă май нимĕç хаçачĕсен мухтанчăк сасси чакса пынине паллӑ туса, Лозовский юлташ нимĕçсен июлĕн 7-мĕшĕнче тухнă «Франкфуртер Цейтунг» хаçатĕнчен пĕр пысăк вырăн илсе кăтартнă. Çак хаçат Хĕвелтухăçĕнче Германия пирвайхи хут хăяр та хăрушă противнике тĕл пулчĕ тесе йышăнать. Хĕвеланăçĕнчи çапăсусемпе танлаштарсан, тесе паллӑ тăвать хаçат, «кунта нумай тĕлсенче противник активлăха сухатман» тата «Германи «савăлăсене» хăйсене противник хупăрласа илес хăрушлăх час-часах тухса тăнă».

Ютçĕршывсен пичечĕ Хĕрлĕ Çаран геройла кĕрешĕвĕ çинчен

НЬЮ-ЙОРК, июлĕн 8-мĕш. (ТАСС). Ĕнер Америка хаçачĕсем Хĕрлĕ Çаран контратаки çинчен Мускавран пĕлтернисене пысăк заголовоксемпе пичетлесе кăларнă.

Мĕнпур пичет Хĕрлĕ Çар читтĕ вăйлă паттăрлăх тата вăй-хăват кăтартнине палăртать. «Нью-Йорк геральд трибюн» хаçат умстатьяра çапла çырать: Хĕрлĕ Çар часĕсем нимĕçсене Березина юханшывĕ çинче тата ытти вырăнсенче малалла кайма чарчĕç пулмалла. Германи çарĕн наступлени тăвас хăвачĕ вăйсăрланнине кăтартакан паллăсем пур. Вырăссен тĕп çарĕсем, совет авиацийĕ тата танксен вăйĕсем сыхланса юлнă, национал-социалистсем халĕ кăна совет çарĕн хирĕç тăмалли тĕп линийĕсем патне сывхараççĕ.

Юнайтед пресс агентстви çакна кăтартать: Германи коммюникисенчен, нимĕçсем Германи çарĕн главнăй командованийĕ шутланинчен сахал ăнăçусем тунă, Хĕрлĕ Çар вăрçă ĕçне нимĕçсем кĕтмен вăйпа тата ăнăçлăхпа туса пырать.

Ассошиэйтед пресс агентствин корреспонденчĕ Маккензи те вырăс çарĕн хирĕç тăрас хăвачĕ сисĕнмеллех вăйланнине палăртать. Корреспондент çапла çырать: «Хĕрлĕ Çар тăшмана хирĕç хытă тăни Германин хăвăрттăн малалла каймалли планне аркатрĕ».

Пичет Лондонран, Стокгольмран тата ытти вырăнсенчен паракан пĕлтерӳсене пурне те куранмалла вырăнсене пичетлет. Çак пĕлтерӳсенче Хĕрлĕ Çар ĕçĕсене майлă çыраççĕ. Юнайтед пресс агентствин Лондонри корреспонденчĕ пĕлтернĕ тăрăх, авторитетлă çынсем хушшинче вырăссем лайăх çапăçаççĕ тесе каласаççĕ. Нимĕçсем сывлăшра пуçпулса тăма пултарайман. Вырăссем нимĕçсен малта пыракан бронетанковăй вăйĕсене питех те канлĕх памаççĕ. Лайăх пĕлсе тăракан çынсен шухăшĕпе, нимĕçсем хăйсен малта пыракан вăйĕсене сывлăшран снабжени тăратас тĕлĕшпе йывăрлăх тӳсеççĕ, мĕншĕн тесен вĕсене советăн сывлăшри вăйĕсене çĕмĕрсе тăкма май килмен».

Нимĕçсем паракан пĕлтерӳсенче те, Хĕрлĕ Çар вăйлăн хирĕç тăнă май, нимĕçсем пысăк йывăрлăхсене тĕл пулнине йышăнаççĕ. «Колумбия бродкастинг» радиовещательнăй компанин Анкарари корреспонденчĕ: Германин Анкарари çынниçем хальхи вăхăтра пĕр эрне каярахринчен чылаях хăйсене мухтанчăкăр тытаççĕ, тесе пĕлтерет. Ун чухне, пĕр эрне каярах вĕсем Германия Совет Союзне хăвăрт çĕнтерет, тесе каланă. «Нью-Йорк таймс» хаçатăн Анкарари корреспонденчĕ çапла кăтартса парать: икĕ эрне каялла Германин çар атташи нимĕçсем темиçе эрне хушшинчех çĕнтереççĕ тесе мухтаннă. Хальхи вăхăтра Германи атташи вăрçă темиçе уйăха тăсăлать тесе калать. Юнайтед пресс агентствин корреспонденчĕ, Германин пропаганда министерстви организацилениппе ытти корреспондентсемпе пĕрле фронт тăрăх кайса çӳренĕскер, нимĕçсем Совет Союзĕн моторизованнăй хĕçпăшалĕн пахалăхĕпе тата хисеплĕхĕпе тĕлĕнеççĕ тесе каласа парать.

«П. М.» тата ытти хаçатсем Германи çар командованийĕн Германин «çитĕнĕвĕсем çинчен калакан сводкисем тата пичет пĕлтерĕвĕсем ĕç çинчен тĕплĕн каламаççĕ, вĕсенче фактсем çук тесе палăртаççĕ.

ЛОНДОН, июлĕн 7-мĕш. (ТАСС). «Ньюс кроникл» хаçатăн военнăй обозревателĕ çапла çырать: Германипе Совет Союзĕ хушшинчи вăрçă фронтĕнчи положени çинчен пыракан информацире Англи пичечĕ вырăс çарĕсем çĕршыври юханшывсен чăрмавĕсемпе лайăх усă курнине уйрăмăнах палăртать. Çавăн пекех Англи пичечĕ Советăн истребительнăй авиацийĕн çĕнтерĕвĕсене те палăртать. Вырăссен çĕр çинчи çарĕсем сывлăшри çар вăйĕсемпе питĕ тачă çыхăнса çапăçаççĕ. Авиаци енчен вăйлă пулăшу пулмасан, танксен ӗçĕ ăнăçлă пулма пултарайманнине вырăс çарĕсем пĕлеççĕ. Вырăс çарĕсем лайăх маневрсем тума пултарнине тата хастарлă та тимлĕ пулнине кăтартса пичĕç.

ЛОНДОН, июлĕн 8-мĕш. Рейтер агентстви пĕлтернĕ тăрăх, «Нейе Цюрхер цейтунг» хаçатăн корреспонденчĕ, хăй Львовра пулни çинчен пĕлтерсе, çапла çырать: вырăс танкĕсем нумайĕшне, çав шутрах специалистсене те тĕлĕнтереççĕ. Нимĕçсем сакăр кун хушши пĕр чарăнмасăр çапăçнă хыççăн Львов хулине тытса илчĕç. Вĕсене вырăс танкĕсем нумай хисеппе атакăланă. Корреспондент вырăссен орудийĕсем, гусеничнăй мототранспорт тата танксем çинчен, вĕсем вĕрçĕнĕ пулни, илемлĕ сăрлани, лайăх туни тата конструкцилени çинчен çырса пĕлтерет. Вырăссем хăварнă позицисенче час-часах научнăй ыйтусем çинчен çырнă кĕнекесене тупма пулать, тесе палăртать.

Юлашкинчен корреспондент вырăссем пур çĕрте те çине тăрса хирĕç тăраççĕ, тесе çырать. Вырăссен каялла чакмалла пулсан, вĕсем ăна йĕркеллĕ, çар хатĕрĕсемпе оборудованисене пĕрне те пăрахса хăвармасăр тăсаççĕ. (ТАСС).

ЛОНДОН, июлĕн 9-мĕш. (ТАСС). Малтанхи пекех, Совет Информаци Бюровĕн пĕлтерĕвĕсене Англири хаçатсем пурне те куранмалла вырăнта пичетлесе кăлараççĕ. Заголовоксенче: Хĕрлĕ Çар контратакăсем тăвать, тесе паллӑ даваççĕ. «Дейли мейл» хаçат хăйĕн Стокгольмри корреспонденчĕ пĕлтернине паллӑ вырăнта пичетлесе кăларнă. Корреспондент çапла çырать: «Нимĕçсем калама çук хаяр наказани тӳснĕ. Вырăнти çынсем пĕлтернĕ тăрăх, нимĕçсен çухатăвĕсем питех те пысăк. Германирен пырса çитнĕ çыпсем каласа панă тăрăх, аманнă салтаксем тиенĕ поездсем Берлина вĕçĕхĕррисĕр пырса тăраççĕ, мĕншĕн тесен Польшăпа Хĕвелтухăç Пруссири госпитальсем тулса ларнă».

СТОКГОЛЬМ, июлĕн 7-мĕш. (ТАСС). Швеци информаци бюровĕ Буллс Анкараран çапла пĕлтерет: кунта килекен питĕ шанчăклă сведенисем вырăс çарĕсем тăшмана хирĕç хытă тăни çинчен калаççĕ. Вырăс салтакĕсем тата граждăнла халăхăн моралĕ шухăшкăмăлĕ питĕ çирĕп. Агентство пĕлтернĕ тăрăх, обществăн мĕнпур сийĕсенчи арçынсемпе хĕрарăмсем те çара каяççĕ, е фабрикăсемпе заводсене ĕçлеме кĕреççĕ. Малалла агентство, Германин Анкарари çынниçем Германи çухатăвĕсем халиччен илтмен-курман пек пысăккине, çак вăрçăра çухатусем халиччен пулнинчен питĕ нумайăнне йышăнаççĕ, тесе пĕлтерет.

Утăна тирпейлĕн пухса кĕртер

Колхозсем утă çулаççĕ

КОМСОМОЛЬСКОЕ, июлĕн 10-мĕш. **(Телефонпа).** Июлĕн 8-мĕшĕнче «15 лет Чувашии», 9-мĕшĕнче—«Красный маяк», паян «Большевик» колхозсем утă çулма тухрĕç. «15 лет Чувашии» колхозра утă çулнă çĕрте ĕçлекенсем валли столовăй организацилене, столовăй июлĕн 8-мĕшĕнчех ĕçлеме пуçларĕ. Паян кăнтăрла иртсен «Оборона», «Пролетарий» тата «Новая жизнь» колхозсем утă çулма тухаççĕ. «Янка Турмыш» колхоз паян клевер тата утăлăх акнă викăна çулса пĕтерет.

Колхозсем çулса типĕтнĕ утăн пирвайхи партинех государствăна пама хатĕрленеççĕ.

М. ЯКОВЛЕВ.

КУСЛАВККА, июлĕн 10-мĕш. **(Телефон тăрăх).** Районра паян нумай колхозсем утă çулма тухаççĕ. Утă çулмалли вырăнсем пур колхозсен те пур. «Красный моряк» колхозăн 87 гектар çинче утă çулса илмелле. Колхоз пысăк мар. Çавах та вĕсем, çарансенче 4—5 кун ĕçлесе, утăна лайăх пухса кĕме пултараççĕ.

Утă çулмалли машинăсене пурне те юсаса çитернĕ. Комаровкăри «Большевик» колхозăн сенокосилкăсем 4. Вĕсем пурте йĕркеллĕ.

Агроном **Н. КОПЫЛОВ.**

СЕНТЕРВАРРИ, июлĕн 10-мĕш. **(Телефон тăрăх).** Утă çулма пур колхозсем те тухнă. Июлĕн 7—8-мĕшсенче Ленин ячĕпе тата Чкалов ячĕпе тăракан, «Шордан», «17-ый партсъезд», «Волна» колхозсем клевера тата çырмасенчи утăна çулма тытăннă. Чылай колхозсенче 5—6-шар гектар çулнă.

Кушникри «Волна» колхоз июлĕн 9-мĕшĕнче йăлăм леш енчи çаран çинче утă çулма тытăнчĕ. Ытти колхозсем те утă çулма çак кунсенчех йăлăма каяççĕ.

Районра 42 сенокосилка, вĕсенчен 38 сенокосилкипе ĕçлеççĕ. Лашапа ĕçлемелли кĕреплесем 30, вĕсем пурте юсавлă. Колхозсенче çава лапаткисем çителĕклĕ.

Н. ПЕТРОВ.

Райсĕрĕçпайĕн главнăй агрономĕ.

Тăхăр колхоз государствăна утă парса татнă

КАЛИНИНО, июлĕн 10-мĕш. **(Телефон тăрăх).** Пур колхозсенче те хĕрсе утă çулаççĕ. 9 колхозра утă çулса пĕтернĕ те ĕнтĕ. Вăл колхозсем государствăна утă тăратмалли обязательствăна та пĕтĕмпех тултарнă. Кӳльхĕрринчи «Трактор», Услапари «Броневик», Элменти Пушкин ячĕпе тăракан тата Аçăмçырмари «Коминтерн» тата ытти колхозсем те государствăна утă парса татнă.

Июлĕн 15-мĕш тĕлне пур колхозсем те утă çулса пĕтереççĕ. Колхозсем государствăна утă тăратас плана та çав срокрах пурнăçласситĕн кĕрешеççĕ.

И. СОЛОВЬЕВ.

Райсĕрĕç пайĕн заведующийĕ.

Хăй çинчен хăех калакан документ

Брестра (Франçин оккупациленĕ зони) тухакан «Депеш» хаçат çав хула пуçлăхĕн приказне пичетлесе кăларнă. Приказра çапла каланă: «Германи çар командованийĕн инструкцийĕ тăрăх Брест муниципалитечĕн пуçлăхĕ халăха çак кăтартусене пурнăçа кĕртме чĕнет: 1) çар управленийĕн начальникĕ хушнă тăрăх Франципе унти халăха французен виçĕ краскăллă флагне çакма чарнă. 2) Итальянецсене, уйрăмăнах Италин Брест хулинчи вице-консулне Виктор Иоба, нимĕнле сăмахсемпе те кӳрентермелле мар. Çак асăннă вице-консула татах та кӳрентерни пулсан, Брест хулине кашни расрах штраф хурса наказани параççĕ. 3) Германи çар çыннисем çине чулсемпе е ытти япаласемпе пенипе асăрхасан, çав çынсем тĕлĕшпе репрессиллĕ чи çирĕп мерăсем йышăнаççĕ. Айăплисене тупса палăртмасан, хула çине пысăк штраф хураççĕ. Хула пуçлăхĕ: халăх çавăн пек инцидентсем тăвассинчен сыхланса тăрĕ, тесе шанса тăрать, мĕншĕн тесен çавăн пек ĕçсене пула хулари халăх пысăк сиен курма пултарать».

Çак документ Франçи халăхĕ оккупантсем çине çавтери тарăхни тата вĕсене курăнманни çинчен ыççăнах каласа парать, ун пирки комментарисем те кирлĕ мар. (ТАСС).

ССР Союзне хирĕç кĕрешме французсен „доброволецсен корпусне“ тума хăтланни арканса кайнă

ЛОНДОН, июлĕн 7-мĕш. (ТАСС). «Дейли мейл» хаçатăн Мадридри корреспонденчĕ çапла пĕлтерет: нимĕçсемпе пĕрле Совет Союзне хирĕç кĕрешме французсен «доброволецсен корпусне» тума хăтланни пĕтĕмпех арканса кайнă. Мĕншĕн тесен, Франци халăхĕ хушшинче Совет Союзне хирĕç кĕрешме килĕшекенсем çук.

Германи салтакĕсем наркотиксем йышăнни çинчен Америкăри организаци пĕлтерни

НЬЮ-ЙОРК, июлĕн 9-мĕш. (ТАСС). Америкăри психологсенчен, психиатрсенчен тата социологсенчен тăракан организаци—«Комитет для поддержания национальной морали» ятлă статья пичетлесе кăларнă, унта Германи салтакĕсем çапăçăва кĕрес умĕн эрех ĕçеççĕ тата наркотика йышăнаççĕ, тесе çырнă.

Франçин оккупациленĕ зонинче Америка фончĕсем çине секвестр хунă

НЬЮ-ЙОРК. июлĕн 8-мĕш. Юнайтед пресс агентстви çапла пĕлтерет: Германи çар влаçĕсем Парижре Франçин оккупациленĕ зонинче американецсен тата Америка фирмисен банкĕсенчи мĕнпур счечĕсем çине секвестр хунине çирĕç ответлесе тунă. Франçин оккупацилемĕн зонинче американецсен фончĕсем çине ку вăхăтченех секвестр хунă-ха. (ТАСС).

Машинăсем пурте юсавлă

СĔНТĔР, июлĕн 10-мĕш. **(Телефон тăрăх).** «Çĕнĕ Юнга» колхоз июлĕн 8-мĕшĕнче утă çулма тухрĕ. Июлĕн 9—10-мĕшсенче нумай колхозсем клевер, утăлăх акнă викăна çулма пуçларĕç. Чкалов ячĕпе тăракан колхоз йăлăмри çаран çинче утă çулма тытăнчĕ. Колхозсем утă çулнă çĕрте пĕрле апатланас ĕçе организацилеççĕ.

Районра 54 сенокосилка. Вĕсене пурне те юсанă. Сенокосилкăсемпе клевер тата вика çулса пĕтерсенех, вĕсене тырă вырма юрăхлă тăваççĕ.

И. ЕРШОВ.

Пулă ĕрчетни пысăк тупăш парать

ЭЛЕК. Ефремкассинчи «1-ое Мая» колхоз 1937 çулта пысăк пĕве турĕ. Иртнĕ çулсенче пĕвене янă пулăсем халĕ питĕ аван ĕрчеççĕ. Ку тарана çитиччен пĕвере ĕрченĕ пулăсенчен колхоз 2 тин тенкĕ ытла тупăш илчĕ.

А. ОРЛОВ.

Ответлă редактор В. Я. ЯКОВЛЕВ.

Мĕнпур предприятисем, учрежденисем, домоуправленисем, клубсем тата кинотеатрсем

„ГЛАВКИНОПРОКАТĂН“ ЧĂВАШ РЕСПУБЛИКИНЧИ КОНТОРИНЧЕН ОБОРОНА ТЕМАТИКИ ТĂРАХ ӲКЕРНĔ САКАР ПЕК ФИЛЬМСЕНЕ ИЛМЕ ПУЛТАРАССĔ:

Анлă пленка çине ӳкернĕ саслă фильмсем:

„Собака на войне“
„Умей оказывать первую помощь“

Ансăр пленка çине ӳкернĕ саслă фильмсем:

„Детские противогазы“
„Санитарно-химическая обработка на обмывочном пункте“
„Протквохимическая оборона кинотеатра“
„Группа самозащиты“
„Индивидуальные санитарные и химические пакеты“

Ансăр пленка çине ӳкернĕ сасăсăр фильмсем:

„Простейшие укрытия от авиабомб“
„Воздушный налет“ т. ыт.

Киноустановкăсен рекламине сăнаса тăрăр.

„Главкинопрокат“ Шупашкар хулинчи организацисене хăйĕн аппаратурине тата киномеханик парать. Телефон № 3—95.

„Главкинопрокатăн“ Чăваш республикинчи контори.

СКОРО! СМОТРИТЕ НА ЭКРАНАХ РЕСПУБЛИКИ СКОРО!

НОВЫЙ ХУДОЖЕСТВЕННЫЙ ФИЛЬМ

ТАНКЕР „ДЕРБЕНТ“

(По повести Ю. КРЫМОВА).

Постановка заслуженного артиста республики А. ФАЙНЦИММЕРА.
Оператор—С. ИВАНОВ. Художник—М. ЮФЕРОВ. Композитор—Г. ПОПОВ.

В ГЛАВНЫХ РОЛЯХ:

арт. А. КРАСНОПОЛЬСКИЙ, заслужен. арт. РСФСР А. ГОРЮНОВ, арт. К. МИХАЙЛОВ, арт. Тамара БЕЛЯЕВА, арт. А. ЖИГОТСКАЯ.

ПРОИЗВОДСТВО ОДЕССКОЙ КИНОСТУДИИ.

ВЫПУСК „ГЛАВКИНОПРОКАТ“.

Чебоксарская акушерская школа

с отделением санитарных фельдшеров и медицинских лаборантов Наркомздрава Чувашской АССР на 1941—42 учебный год об‘являет прием учащихся на 1 курс.

Школа готовит акушерок, лаборантов для лечебных учреждений и санитарных фельдшеров для Чувашской республики.

Срок обучения три года, на отделении лаборантов—два года.

В школу принимаются лица обоего пола в возрасте от 15 до 35 лет, имеющие общеобразовательную подготовку не менее семи классов средней школы.

Все поступающие подвергаются приемным испытаниям по арифметике, русскому языку, родному языку (для национальных республик) и по Конституции СССР.

Прием заявлений производится с 10 июня по 25 августа 1941 года.
Приемные испытания с 10 по 25 августа.
Начало занятий с 1 сентября

БЕЗ ИСПЫТАНИЙ ПРИНИМАЮТСЯ: окончившие полную среднюю школу (десятилетку, рабфак, техникум) и отлично окончившие семилетку по основным предметам (кроме рисования, пения, черчения, физкультуры).

Заявления подаются на имя директора с приложением следующих документов (в подлинниках):

а) свидетельство об образовании,
б) свидетельство о рождении, выданное органами ЗАГС,
в) две фотокарточки с собственноручной подписью на них.

Кроме того, поступающие в возрасте от 16 лет и выше пред‘являют лично свой паспорт.

Для ответа при подаче заявлений должны быть приложены почтовые марки на 60 коп.

Лица, допущенные к испытаниям, будут вызваны специальным извещением.

Принятые в школу по нужда м сти обеспечиваются общежитием и стипендией на общих основаниях.

АДРЕС: г. Чебоксары, улица Ленина, поселок Волгостроя, Санитарно-фельдшерско- акушерская школа.

3—1 ДИРЕКЦИЯ.

ЧЕБОКСАРСКИЙ

КООПЕРАТИВНЫЙ ТЕХНИКУМ

ЦЕНТРОСОЮЗА СССР и РСФСР

ОБ‘ЯВЛЯЕТ

ПРИЕМ УЧАЩИХСЯ НА I КУРС БУХГАЛТЕРСКОГО И ТОВАРОВЕДНОГО ОТДЕЛЕНИЙ

ТЕХНИКУМ ГОТОВИТ: бухгалтеров и товароведов для районных союзов и потребительских обществ.

Срок обучения на бухгалтерском отделении—2 года.
Срок обучения на товароведном отделении—3 года.

НАЧАЛО ЗАНЯТИЙ 1 СЕНТЯБРЯ 1941 ГОДА.

В техникум принимаются граждане СССР в возрасте от 15 до 30 лет с образованием в об‘еме неполной средней или семи классов средней школы.

Прием заявлений производится с 1-го июня по 10 августа. Все поступающие в техникум представляют следующие документы в подлинниках: а) заявление на имя директора с указанием на какое отделение желает поступить, б) об образовании, в) свидетельство о рождении, г) справку о состоянии здоровья, д) две фотокарточки с собственноручной подписью поступающего.

Приемные испытания производятся с 10 по 25 августа: по Конституции СССР, математике (арифметика, алгебра и геометрия) и русскому языку и литературе в об‘еме 7 классов средней школы.

Окончившие неполную среднюю школу или 7 классов средней школы с аттестатом отличника принимаются в техникум без испытаний.

Принятые в техникум обеспечиваются общежитием

Плата за обучение и стипендия устанавливаются на общих основаниях.

АДРЕС ТЕХНИКУМА: город Чебоксары, Чувашской АССР, ул. Ленинградская, дом № 3.

Для ответов должны быть вложены в конверт почтовые марки на 60 коп.

4—3 ДИРЕКЦИЯ.

РЕДАКЦИ АДРЕСĔ: г. Чебоксары, ул. Володарского, 5, Дом печати. ТЕЛЕФОНСЕМ: редакторăн — 0—67, редактор заместителĕн — 3—97, редакци секретарĕн — 4—40, пропаганда пайĕн — 4—97, 7—97, ялхуçалăхĕпе промышленность пайĕсен — 0—88, сырусемпе рабселькорсен пайĕн — 2—30, дежурнăйăн — 6—23, «Ленин çулĕпе» журналăн — 0—85, издательство конторин—0—23.

НТ 4123

Гор. Чебоксары, типография № 1 Управления издательств и полиграфии при СНК ЧАССР, Заказ Ь 345. ф. 6 в8 84 п. л.